26-88

Пӗтӗм тӗнђери пролеттарисем, пӗрлешӗр!

ПӖТӖМ СОЙУСРИ КОМУН. (полђш.) ПАРТ.

ЂӐВАШ РЕСПУПЛӖКӖНЂИ КОМИТТЕЂӖН

# 6-мӗш ПЛЕНӐМӖН ӖҪӖСЕМ

(ОК ҪЕКРЕТТАРӖ ПЕТРОВ й.

ШУПАШКАР ХУЛ. ОРКАНИСАТ.

Є/Х ТУНӐ ТОКЛАТ

ПСК(п)П ЂӐВАШ РЕСПУПЛӖК. КОМИТТЕЂӖ

ШУПАШКАР 1926 ҪУЛ

Пĕтĕм тĕнђери пролеттариссем, пĕрлешĕр

ПĔТĔМ СОЙУСРИ КОМУН. (поđш.) ПАРТ.

ЂĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔНЂИ КОМИТТЕЂĔН

# 6-<u>мĕш</u> ПЛЕНĂМĔН ĔÇĔСЕМ

(ОК çекреттарĕ Петров й. Шупашкар хулинђи орканисатсинђе 6/X тунă доклат).

ПСК(п)П ЂĂВАШ РЕСПУПЛĔК. КОМИТТЕЂĔ
ШУПАШКАР — 1926 ç.

Отпечатано в типографии школы Ф.З.У. Чебоксары, Чувашлит № 967. Зак. № 434
Тираж 3000 экз.

# ПСК(п)П ОК 6-мĕш пленăмĕн ĕçĕсем.

(Петров йулташ Шупашкар хулинђи орканисатсинђе 6 Х—26 ç. тунă токлат).

Йулташсем! ОК. 6-мĕш пленăмĕн ĕçĕсем çинђен каламалли токлата икĕ майлă тума пулаť. Пĕр майĕпе—пленăм мĕн ĕçлени, вăл йепле решшенисем йышăнни çинђен йĕркипе каласа кăтартма, унăн ĕçĕсене карттăђкă çине ўкернĕ пекех ўкерме пулаť. Ман шутпа, токлата тепĕр майлăрах туни авантарах пулĕ: ОК пленăмĕ мĕнле ĕçсем тунипе йепле решшенисем йышăнни çинђен тĕппипе каламасăрах — тўрех,— хамăр сойусри условисем çинђен, мĕншĕн пленăм хăй йышăннă решшенисемсĕр пуçне, урăхла решшенисем йышăнма пултарайманни çинђен йепле сăлтавсем ку решшенисене йышăнмалла туни çинђен, каласан авантарах пулĕ. Йулташсем, епĕ хам токлата кайран кăтартнă пек тăвас тетĕп: тўрех, пирĕн пленăм йепле условисемпе сăлтавсем хушнипе хăй йышăннă решшенисене йышăнни çинђен каласа парас тетĕп. Пленăм ресољутсийĕсене тĕплĕн вĕренсе пĕлес йенђен вырăнсенђе ĕçлемелле пулаť.

Пленăм ĕçне тума пуçланă ђух, пирĕн хађхи пурăнăç условисене кура, мĕнле паллăрах, мăнăрах ыйтусене куç умне тăратмалла пулнăши? Малтанах—епĕр пленăма хуçайствăн çĕн çулĕ умĕн пухнине; иккĕмĕш—пирĕн кăçал та ĕлĕкхи пекех, каллех тырпул çитменнине, тырпул каллех нађартарах пулнине, пирĕн Ђăваш респуплĕкĕнђи халăх хăйĕн тырпулĕпе тăранса пурăнма пултарайманнине; виççĕмĕшĕ— кун пек пленăм, парттин шалти ĕçĕсемсĕр пуçне тата хуçайствă ыйтăвĕсене те сўтсе йавакан пленăм Оплăçри Партти Конферентсийĕ иртнĕренпе иккĕмĕш пленăм пулнине куç умĕнђе тытмалла пулђĕ.

Йанвар уйăхĕнђи ОК пленăмĕ хыççăн, епĕр çукаçипех парттин шалти ĕçĕсене çирĕплетес йенђен ĕçлерĕмĕр. Ăна

есĕр пурте лайăх астуса тăраттăр. Мĕншĕн капла пулнине каламастăп, ăна хăвăр та аван пĕлетĕр.

Унтан пирĕн акă çакна астуса тăмалла. Ку ыйтусем пленăмра кайарах йулса ларăнђĕç. Вĕсене маларах лартса, кирлĕ решшенисем йышăнмаллађђĕ, вара вĕсене ĕçе кўртсе пынă майпа, пирĕн Ђăваш респуплĕкĕн куллен кунхи пурăнăçĕ кăтартнипе, кирлĕ йусавсем кўртмеллеђђĕ.

ОК 6-мĕш пленăмĕ йепле ĕçлемеллине, йепле куçпа пăхса ĕçне хăш кĕтесрен пуçламаллине çак хаљ кăтартнă условисем кăтартса пађĕç. Ђăнахах та пленăм, хулари тата уйессенђен килнĕ активпа пĕрле, решшенисене çак условисене асра тытса йышăнђĕ.

Малалла, пленăм йепле вăхăтра ĕçлени çинђен. Пленăм пухăннă вăхăтра пирĕн Сойус йепле условире пурăнаŧ? Ђăн малтан, тĕрлĕрен йăвăрлăхсем, çитменлĕхсем, йăнăшсем пур пулсассăн та, епĕр ку кĕре çитиђђен хуçайствăна хăпартса тĕреклетес вăхăта иртте ртĕмĕр; пĕтĕмпе, талăккăшпе илсессĕн, ЕÇП-ĕн пилĕк çулхи вăхăтне, партти кĕтнинђен те лайăхрах, килĕшўллĕрех иртте ртĕмĕр. Йулташсем, çакна астуса тăмалла. Епĕр халĕ промышлĕннăçра та, йалхуçайствинђе те пур йенђен те пирĕн хуçайствă хăпарнипе тĕреклен нине куратпăр; хуçайсвăн уйрăм пайĕсенђе епĕр вăрçăђђенхи ђикĕрен те иртсе кайни пур. Малалла пирĕн умра Парттин 14-мĕш сиесĕ тĕллесе кăтартнă пĕр сатађ пур. Ку сатађ — пирĕн Совет Респуплĕкĕсен Сойусне интустрилатасси; пуршуйсенђен йулнă саппассемпе усă курнинђен, пирĕн кивĕ хапрăк савăтсене технĕккă кăтарнă пек çĕнетесси тата çĕнĕрен хапрăксавăтсем тăвасси йеннелле куçмалла.

Кĕркуннене çывăх пирĕн çакнашкал карттин курăнаŧ.

Умра çавăн пек пысăк çĕнĕ сатађсем тăнă ђух, пирĕн, йулташсем, иртнĕ вăхăтсенђе тунă йăнăшсене, кăлтăксене аса илес пулаŧ.

Йут патшалăхсене хамăр таварсене сутса, унтан таварсем кўмелли плана пĕлтĕр пирĕн ытлашши хăпартса, сарса тунине, епĕр пĕлетпĕр. Вăл план тăрăх кунтан тырпул хатĕрлесе йарса, лерен — йут патшалăхсенђен — тĕрлĕрен машшинсем, хапрăксавăт хатĕрĕсем турттарса килмеллеђђĕ. Анђах ку

планра тырпул хатӗрлесе йамалли шута, хамӑр ҫӑнҫӑнах пуҫтарса йама пултарнинҫен, хӑпартарах, сарарах илни палӑрҫӗ. Ҫак плана епӗр вӑхӑтра, пӗтӗмпех вырӑна кӳртме пултараймарӑмӑр: йут патшалӑхсене, хамӑр тӗсенипе, таварсем кӑларса пӑрахма пӗлеймерӗмӗр; ҫавӑнпа та, промышлӗннӑҫа сарас йенҫен тунӑ прокраммӑна та ҫителӗклех вырӑна лартма пултараймарӑмӑр; кайран, парттин 14-мӗш сиесӗ йышӑннӑ решшенисене вырӑна кӗртнӗ майпа, ӗҫне туса пынӑ вӑхӑтрах, пирӗн ку плана пӑхса тухса, кирлӗ йусавсем кӳртмелле пулҫӗ. Ҫак малтан кӑтартнӑ условисем пӑртак ӗҫе йӑвӑрлатса тытса тӑҫӗҫ. Халӗ—партти хӑй кӑлтӑкӗсене йусама пултарҫи? тесе ыйтсассӑн, тӳрех, хыттӑнах калама та йурат: партти хӑйӗн ҫитменлӗхӗсене асӑрхаса, йӑнӑшсем ҫинҫе вӗренсе, парттин шалти хӗрӳллӗ вӑрҫипе мар, ҫилленсе мӑкӑртатнипе те мар, тимӗр пек хытӑ тистсиплинӑ пуррипе хӑйне хӑй хытӑ тытнипе пур ыйтусене те Ленин кӑтартнӑ пек туса татма пултарҫӗ. Халӗ епӗр куратпӑр, пирӗн промышлӗннӑҫ, хӑйӗн тумалли прокраммине пӗтӗмпе пекех туса ҫитерсе, 24—25-мӗш ҫулхинҫен 42, 6% ӳссе хӑпарҫӗ. Промышлӗннӑҫ ӳснине кӑтартакан ытти ҫыхвӑрсем ҫинҫе, сире ҫыхвӑрсемпе ӗшентерес мар тесе, епӗ тытӑнса тӑмастӑп. Ҫак 42,6%, епӗр кӑҫал, пӗлтӗрхинҫен шутласассӑн, 50% ҫывӑхах ытларах туса пынине кӑтартат, ку тата тепӗр йенҫен, партти вайӗ ҫитнипе тума май пулнӑ таранҫҫен, хӑй умӗнҫе тӑнӑ сатаҫсене ҫителӗклех тунине, пӗлтерет. Кӑҫал тунӑ протуксисен хакне укҫа ҫине, вӑрҫӑҫҫенхи шутпа, куҫарас тесессӗн, вӑл 5 797 мӗлйун тенкӗ пулат, ҫитес 26—27-мӗш ҫулта 6.640 мӗлйун тенкӗлӗх, урӑхла каласассӑн, кӑҫалхинҫен шутласассӑн 15% нумайрах тӗссе хунӑ.

Епӗр малалла кайни пӗр йенҫен питӗ аван: пӗлтӗрхинҫен шутласассӑн, епӗр таварсем тӑвассине хӑпартрӑмӑр: тепӗр йенҫен анҫах ыйту сиксе тухат: мӗншӗн вара епӗр пӗлтӗр 24—25-мӗш ҫултинҫен 42,6% нумайтарах турӑмӑр, кӑҫал 15% ҫеҫ хӑпартмалла тесе тӗсесе хутӑмӑр? Сахалтарах пек туйӑнат; анҫах, пӗлтӗр пире пуршуйсенҫен йулнӑ кивӗ саппассемпе усӑ курни ҫӑмӑллатрӗ. Кӑҫал саппасра пысӑк кӑпитал ҫук. Йут патшалӑхсенҫи кӑпиталҫӑсем пире укҫа кивҫен памаҫҫӗ.

Пирӗн ҫак йӑвӑрлӑхран хамӑр вӑйпах тухас пулать: промышлӗннӑҫа йусама та, ҫӗнӗрен хапрӑксавӑт тума та хамӑр алӑри кӑпиталпа ҫеҫ тума пултаратпӑр. Ҫаксене пӗтӗмпе асра тытса пирӗн халиҙҙен ӗҫлекен хапрӑксавӑтсем кӑҫал протуксси хӑпартасси йенҙен 15% ҫеҫ тӗсесе хуҙӗҫ. Вара ҫаксене пӗтӗмпе шута илсе тата ытти кӑпиталисӑмлӑ патшалӑхсенҙе вӑрҫӑҙҙенхинҙен, мӗн ҙухлӗ хӑпарнине асӑрхасан, 15% хӑпарни сахалах марри курӑнать.

Йулташсем, пирӗн партти хуҫайствӑ протуксине хӑпартас йенҙен 15% хӑпартмалла тесе кӑтартса паҙӗ. Ку пире—парттире тӑракан ҫынсене, мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине пӑхмасӑр пурне те, тирпейлӗх решимне асра тытса, плана вырӑна кӳртес ҫӗрте хытӑрах тӑрӑшма, планран иртсе кайса ӗҫлеме хушать. Ку плана вырӑна кӳртесси питӗ йӑвӑр, пысӑк ӗҫ, мӗншӗн тесессӗн, пирӗн ытлашши кӑпитал ҫук, мӗн пур пеккине пӗтӗмпех сӑнанӑ, шутланӑ, виҫнӗ. Ҫӗнӗ хапрӑксавӑтсем тумашкӑн, киввисене пӑсса йусамашкӑн сахал мар тӑккаланмалла пулать. Ҫак ӗҫе тума пирӗн респуплӗк 845 мӗлйун тенкӗ*) укҫа тӗсесе хунӑ. Ку укҫа нумай мар. Пирӗн промышлӗннӑҫа хӑвӑртрах сармашӑкн, пире халӗ нумай мӗлйунсем кирлӗ пулаҫҫӗ. Анҙах епӗр халех ун ҙухлӗ нумай кӑпитал ку ӗҫе хума пултараймастпӑр, ҫавӑнпа та 845 мӗлйун та пирӗншӗн пысӑк укҫах шутланса тӑрать.

Промышлӗннӑҫа хӑпартса сарас ӗҫре тӑккаламалли укҫана—кашнӑ пусне кирлине кура ҫеҫ йамаллине, пирӗн ӗҫре кӑтартса, йертсе пыракан ҫынсен лайӑх астуса тӑмалла. Ку укҫа, хытӑ тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, ҙӑнҙӑнах кирли курӑннӑ вырӑнсене ҫеҫ саланмалла. Ҫавӑнпа та йалхуҫайствинҙен ытлашши уйӑрӑлма йураманнине, промышлӗннӑҫӑн халех питех кирлӗ мар пайсене сарма кирлех маррине, ку укҫана пирӗн промышлӗннӑҫӑн самай та йӑвӑр фронтне пӑрахма кирлине, партти пире пӗлсе тӑрса асӑрханма хушать. Пӗтӗм ӗҫлекенсем массин хастарлӑхне ку ӗҫе тунӑ ҫӗре ҫыпӑҫтарса, пирӗн сахал тӑккаланнипех промышлӗннӑҫа питӗ хытӑ сарма майсем тупас пулать. Ку укҫана ҫапла салатмалла.

---

*) Кайарахпа правиттӗлствӑ ку укҫана 900 мӗлйун тенке ҫитермелле тунӑ.

Малалла. 845 мĕлйун укçана пирĕн респуплĕкре çӳрекен пĕтĕм укçаран кăларса илсессĕн, çӳрекен укçа шуҙĕ ҙакаҭ Ку укçана çĕнĕ йапаласем тунă çĕре пăрахсассăн, вара ăна пайанхи кунри происвотствăран кăларни пулаҭ. Çавăнпа та çак укçана респуплĕкре çӳрекен пĕтĕм укçаран кăларса илнипе пĕрлех, ку шăтăка йепле те пулин майсем тупса тултарса хума тăрăшас пулаҭ. Çавăнпа та парттин пĕтĕм вăйне пухса, ĕçлекенсемпе хресҙенсен аллинҙи ахаљ выртакан укçине кретитлă пĕрлешӳсем, перекет кассисем т. ыт. урлă та пухса опорота йама тăрăшмалла.

Епĕр промышлĕннăçа хăпартса сарас шухăшпа кун ҙухлĕ укçа пăрахатпăр пулсассăн, çав вăхăтрах тата хапрăксавăтсем тунă çĕрте ĕçлекен спетсиалиссем, вĕсене кирлĕ тĕслĕрен маттериалсемпе орутисем происвотствăран уйăрăлмалла пулаççĕ, çавăнпа пирĕн ку йенҙен те çитменлĕхсем пулма пултараççĕ.

Парттийтсăсем çак вырăнсене тинкеререх пăхса тирпейлĕх решимне пурăнăçа кӳртме хытă тăрăшас пулаҭ. Кунта вара тирпейлĕх решимĕ пустуй сас çеç маррине, епĕр курăпăр. Кунта тата çакна та калас пулаҭ. Епĕр хăш ҙух тирпейлĕх решимĕ çинҙен çийелтен çеç калаçатпăр; пољшевик ҙĕрипе епĕр ку кирлине ăшра сиссех çитейменха, хамăрăн пĕтĕм вăйа тата пултаруллăха хуçайствăна хăпартса тĕреклетес çĕре пăрахмаллине шухăшăмăрта çирĕплетейменха. Пирĕн хушăмăрта халĕ йулхавлăх пĕтменха. Çавăнпа та пирĕн, пленăмăн ĕçĕсене пăхса тухнă вăхăтра, çаксене пĕтĕмпех аса илсе, ку сатаҙсене ĕçре туса пырас пулаҭ. Кунта тĕслĕрен релики ултавçăсем пек сăмахпах çырлахни йурамасҭ. Хамăр умма тăратнă сатаҙсене пирĕн тăвасах тесе тăрăшса, пĕр пăркаланмасăр, пољшевиксен тистсиплинĕпе туса татмалла, пирĕн куна ĕçе кӳртсе пырас пулаҭ.

Пирĕн промышлĕннăç йепле тăнине пăхса тухнă хыççăн йалхуçайстви йепле тăнине пăхсассăн епĕр, йулташсем, йалхуçайствинҙе те питĕ хăвăрт ӳссе пынине куратпăр. Епĕ ҙыхвăр кăтартса парас тетĕп, вăл тырпул виçипе мар, укçа шуҙĕпе пулаҭ. 1924-мĕш çултан пуçласа епĕр йалхуçайствинҙе примерлă çакнашкал ӳсӳ куртăмăр: вăрçăҙҙенхи хакпа

1923—24-мĕш çулта пĕтĕм хресҙен тупăшлăхĕ 7.839 мĕлйун тенкĕллĕх пулнă, 1925—26-мĕш çулта—10.101,3 мĕлйун тенкĕллĕх, вăл 1923—24-мĕш çулхипе танлаштарсассăн 27,6% ытлараххине кăтартаť. Хаљ пуснă 1926—27-мĕш çулта йалхуçайстви тупăшлăхне 10.723,8 мĕлйун тенкĕллĕх тĕсенĕ, вăл вара 1923—24-мĕш çулхипе танлаштарсассăн 36,6% хăпартнине пĕлтерет. Пирĕн йалхуçайстви протуксийĕ çавăн пек ўссе пыраť.

Вăл протуксин пасара кăларса сутмалли пайĕ, тепĕр тĕслĕ каласассăн таварлăх пайĕ тата хытăрах ўссе пыраť.

1923—24-мĕш çулта пирĕн 1.209,4 мĕлйун тенкĕллĕх, 25—26-мĕш çулта—1.675 мĕлйун тенкĕллĕх таварлăх протукси пулнă, хаљ кĕнĕ 1926—27-мĕш ç. пĕр икĕ мĕлйарт тенкĕллĕх йалхуçайствин таварлăх протуксине тĕсесе хунă. Çапла вара, хресҙенсем хăйсен пĕтĕм массипе хуçайствăн таварлăх пайне хăпартса ҙылай ытлашши саппасне пасара кăларса сутма та майсем тупаççĕ.

1924—25 мĕш çулта пирĕн пĕтĕм тырпул 4.600 мĕлйун пăт пухăннă, çак çулта 300 мĕлйун пăт ытларах пухмалла шутласа хунă. 50 мĕлйун пăтне, шутра тĕслĕрен йăнăшсем пулнине йусама, тата çанталăк усал пулса йе пăр тавраш çĕмĕрнине катма, ҙакарсассăн та, çапах та пĕлтĕрхинҙен илсессĕн 250 мĕлйун пăт тĕслĕрен тырпул ытларах пухăнмалли курăнаť. Çакă, йулташсем, пирĕн йалхуçайстви пурлăхне кăтартакан 4 мĕлйарт пăт ытларах тырпул пуррине кăтартакан пирĕн хресҙен палансĕ. Йалхуçайстви протуксинҙен 556 мĕлйун тенкĕллĕх пирĕн респуплĕк йут патшалăх пасарĕсене кăларса пăрахма шухăшлаť, тата промышлĕннăç таварĕсене 264 мĕлйун тенкĕллĕх, пĕтĕмпе 820 мĕлйун тенкĕллĕх тĕслĕреп таварсем йут патшалăхсене йама тĕсенĕ. Йут патшалăхсенҙен пирĕн пата пирĕн промышлĕннăçа кирлĕ тĕслĕрен машшинсем 745 мĕлйун тенкĕлĕх турттарса килме тĕсесе хунă, çапла вара 75 мĕлйун тенкĕ пирĕн респуплĕк аллинҙе реçервă пулса йулмалла.

Ку ҙыхвăрсем çине пуххалттĕр куçĕпе çеç пăхмасăр, хамăр респуплĕк екконоiмĕкĕ çине политтĕк йенҙен пăхсассăн, ку ҙыхвăрсем пирĕн ĕçлекенсемпе хресҙенсен влаçĕ, пирĕн партти кăтартса пынипе, пĕр пăркаланмасăр, хăвăрт ўссе, сарăлса,

вăрçăҫҫенхи ҫикĕрен те каçса кайнине питĕ лайăх кăтартса параççĕ.

Пирĕн умра, Совет влаçĕ умĕнҫе, çак çулта питĕ ответлă мăнă сатаҫ тăрат — ку тырпул хатĕрлемелли компаҫине иртерессипе.

Çак кампаҫи, пирĕн партти каланипе, тĕслĕрен классен: ĕçлекенсен, хресҫенсен тата ҫаснăй кăпиталăн вăйĕсем тĕкĕшсе тăракан тĕвĕ пулса тăрат. Ытлашши тырпулсем тавра, ĕçлекенсемпе хресҫенсен респуплĕкĕнҫи пурлăхсем тавра питĕ хĕрӳллĕ ĕçсем пулса иртмелле. Пĕр йенҫен, таварлăхсене лайăх хакпа сутасси, укçине илесси, вăл укçана опорота кĕртсе промышлĕннăçа сарасси тата пирĕн çĕнĕрен ĕçлекенсене ĕçе хутăштарасси т. ыт. ĕçсем те пур. Тепĕр йенҫен, ку ĕçсенҫе ҫаснăй кăпиталпа питĕ хĕрӳллĕ, çине тăрса парăнтармалла çапăçасси.

Пирĕн промышлĕннăçа малалла сарасси, хамăр умра тăракан сатаҫсене тĕрĕсрех тума пĕлнинҫен, пирĕн ытлашши, таварлăх тырпула пухас ĕçе хăвăртрах тума пĕлнинҫен килет Çавăнпа та пирĕн Тĕп Комиттет иртнĕ çура ку ыйтусене икĕ хутҫен пăхса тухрĕ. Малтан—ку ĕçе йепле орканисатсилесси йенҫен: тырпул хатĕрлемелли аппарата йĕркелесси çинҫен; иккĕмĕшĕнҫе—мĕн ҫухлĕ тырпул пухма пултарни, мĕн ҫухлĕ йут патшалăхсене йама пултарни т. ыт. çинҫен калаçса пăхрĕ.

Малашне тата ку ĕçпе промышлĕннăç ĕçĕ те, хресҫенсене хапрăксавăт таварне парассипе вĕсен хакĕсем йенҫен, çыхăнат. Промышлĕннăç таварĕсен хакне майлаштарас ыйту, вăл питĕ пысăк ыйту, мĕншĕн тесессĕн, пирĕн ĕçлекенсемпе хресҫенсем лайăхрах, хытăрах çыхăнса тăни хресҫенсене тавара йӳнерех панинҫен килет. Куна аса илтересех пулат. Пирĕн патшалăх пуршуйсен патшалăхĕнҫен йӳнĕрех тăмаллипе, пирĕн таварсем йунĕрех пулмалли çинҫен çакна парттин сăмахпа çеç мар, ĕçрех кăтартса памалли çинҫен, В. И. Ленин пĕрре çеç каламан. Ленин йулташ та кун çинҫен пĕрре çеç каламан, партти те куна пĕрмайах асăнат, анҫах, йулташсем, калăрха: епĕр ку партти кăтартнă сатаҫҫа турăмăр, тесе калама пултараттăри? Çук.

Çук пулсассăн, хуçайствă оркăнĕсенђе ĕçлекен кашнă çынна, кашнă парттийтсăна, вăл ăçта ĕçленине пăхмасăр, партти çак сатађђа пурăнăçа кӳртме хушаť. Ĕçпе Сыхлăх Канашĕ йышăннă постановлени тăрăх 1-мĕш авкустђен тавар хакне ӳкермелли ĕçе, епĕр ку таранђђен те пурăнăçа кӳртме пултараймарăмăр. Çакă, пирĕн хушăмăрта та кăлтăксем пуррине кăтартаť, çавăнпа вĕсене пĕтерме тăрăшас пулаť.

Тырпул хатĕрлемелли кампаңи пĕтĕм Сойусĕпе халĕ йепле пыни çинђен, епĕ тĕплĕнех ђарăнса тăрса калама пултараймастăп, çапах та, паллă туса хăваратăп: халĕ тырпул хатĕрлемелли кампаңи тин сарăлма пуçлаť; тырпул лайăх пулнă пулсассăн та, ку ĕçре ђăн малтанах вырăнта таптаса тăни палăрђĕ. Ку акă мĕнтен килђĕ: ђăн малтан—çанталăк лайăх пулманни тырпула пуçтарма ђарса тăђĕ; иккĕмĕшĕ — кăçал тырпул пулнă вырăнсем—кăнтăр йенђен: Украйнăран, Капкасри çурçĕр йенђи вырăнсенђен, хĕвелтухăçнелле: Атăл таврашне, Кăркăс респуплĕкне тата ытти районсене те куçрĕç. Кусем пĕђĕк йапаласем пек курăнаççĕ, анђах хуçайствăна оркаисатсилес ĕçре, аппарата пăсса, йусаса, ăна вырăнти условисемпе çыхăçтарса тырпула хатĕрлемелли ĕçре, ку йапаласем ĕçе питĕ йăвăрлатаççĕ. Тата çак ĕçе тума пирĕн хушăмăрта пĕрпĕринпе çыхăнса тăмалли çулсем сахалли пĕтерет. Çавăнпа та тырпула хăвăрт пуçтарма майсем çук. Пуринђен ытла ку Кăркăс респуплĕкĕнђе палăраť. Атăл таврашĕнђе тата Çĕпĕрте иртнĕ уйăхсенђе тырпулă, пĕлтĕрхинђен шугласассăн нумай кайа пуçтартăмăр.

Тата йулташсем, халĕ тырпул хатĕрлемелли ĕçре копператси вăйлă ĕçлеме пуçланине, епĕр куратпăр: кăçал копперативсем патшалăхăн сутилӳ оркăнĕсенђен нумайтарах хатĕрлеççĕ. Ку мĕншĕн? Йе пирĕн копператси йусанса лайăхрах ĕçлеме тытăнђи, йе урăх сăлтавсем пури? Тĕп сăлтавĕ пирĕн копператси питĕ лайăхланни мар, патшалăхăн сутуилӳ оркăнĕсене сахаллатни.

Патшалăхăн сутуилӳ оркăнĕсене, копператсин Тĕпри Пĕрлешĕ вĕсемпе сăмах татмасăр вырăнсенђи копперативсем урлă тырпул хатĕрлеме ђарнă. Ĕлĕк вĕсем тырпула копперативсем

урлă хатĕрлеђђĕç те, ку вара хăйсем хатĕрленĕ пек шутланса тăрађђĕ.

Çапла вара, копператси ĕçĕнђе епĕр килĕшӳллĕ йенсем пуррине те куратпăр, анђах, тепĕр йенђен, унта килĕшмен йенсем те пур. Тырпула хăвăртрах хатĕрлеме, ăна вырăнтан вырăна куçарса пăрахма, тата йут патшалăхсене йама та, пире патшалахăн сутуилӳ тăвакан оркăнсем урлă авантарахђĕ — хăвăртрах тума пултараттăмăр. Пирĕн копператтивсем питĕ сапăнђăк, вĕсенђе тата шут ĕçне те çителĕклĕ йĕркелемен, çак йенђен вара çитменлĕхсем пур. Çак çитменлĕхсене халĕ пĕтĕмпех шута илсе йусама тăрăшаççĕ. Копператсине кăçал укçатенкĕ йенђен пĕлтĕрхинђен вăйлăлатнă. Пирĕн тырпул хатĕрлекен оркăнсем кăçалхи çул йусаннă, лайăхрах йĕркеленнĕ, пĕлтĕрхи пăтранђăка тăрăлтарнă. Ĕçре йусанупа тикĕсси пур, çавăнпа та кăçал тырпул хатĕрлемелле кампаңи, пĕлтĕрхинђен шутласассăн, лайăхрах иртсе каймалла пек туйăнаť.

Епĕ ку таранђђен пĕрмайах пĕтĕм Совет Сойусĕ çинђен каларăм. Тата пирĕн Ђăваш Респуплĕкĕнђе мĕн пурши? Кăçал Ђăваш Респуплĕкĕнђе пĕтĕм тырпул 17.479 пин пăт пухăннă. Çав вăхăтрах тата çулталăк хушши тăранса пурăнма тырпул çитменни курăкаť, тепĕр тĕслĕ каласассăн, Ђăваш Респуплĕкĕ тырпул йенђен тефитситлă.

Ђăваш Респуплĕкĕ çĕнĕ çула каллех тефитсистлă кĕрет. Тырпулпа выђăх апаđĕн пĕтĕм ђыхвăрĕсем çинђе тытăнса тăмастăп, тĕп ђыхвăрне çеç кăтартса паратăп. Пирĕн тырпулпа выђăх апаđĕн хисепĕ тефитситлă пулђĕ — ыраш 3.940 пин пăт çитмест, çуртырри 1.150 пин пăт ытлашши пулаť. Çав вăхăтрах тата пĕтĕм Совет Сойусĕпе тырсем аван пулнă.

Тырпул йенђен Ђăваш Респуплĕкĕ тефитситлă, çавăнпа та пирĕн умра пĕр пысăк сатађ тăраť, ку — пирĕн Респуплĕк халăхĕ ваđђи тырпул тата ытти çимĕçсем те хатĕрлесси.

Ђăваш Респуплĕкĕ хăй тулашнелле тырпул йама пултараймасť. Вăл хăйĕн тырпулне пĕтĕм патшалăх хуранне хурса Респуплĕке интустрилатас ĕçе хăвăртлатма та пултараймасť.

Пирĕн ĕçхалăхне, пуринђен малтан ђухăнсене, тăрантарма ытти вырăнсенђен тырпул турттарса килмелле пулаť. Çавăнпа

пирӗн орканисатсипе хуҫайствӑ оркӑнӗсем умӗнђе питӗ пысӑк сатађ тӑраӑ, ку—халӑха вађђи ҫимӗҫ пӗр тытӑнђӑксӑр хатӗрлесси.

ОК пленӑмӗ кӑтартнипе епӗр Респуплӗк тулашнелле сӗлӗ пӗр 600 пин пӑта йахӑн йама пултаратпӑр. Пайанкун та ҫуртыррине уйрӑн пуҫтарманине кура, нумайӗшӗ куна йамалли ҫинђен те кађђӑ-мађђӑ шутлаҫҫӗ. Тырпул йенђен тефитсит пулсассӑн та Респуплӗк хушшинђи пасарсене тырсене (ыраша та) сутма илсе тухмаллине асӑрхаса, ОК пленӑмӗ хӑйӗн постановленине шалти сутуилӳ ӗҫне пӑхса тӑракан Халӑх Комиссариатне пасарсене тухакан тырпула пухас ӗҫре питӗ хастарлӑ ӗҫлеме кирлине кӑтартса пађӗ. Пасарсене тухакан тырпул кулаксем аллине ан лектӗр, ытти районсенелле ан йухтӑр, халӑх хушшинђех йулса илекеншӗн те, сутаканшӑн та килӗшӳллӗ хакпа сутӑнттӑр тесе, пленӑм ҫапла ӗҫлеме хушрӗ.

Копператси урлӑ орканисатсиленсе ҫак тырпула халӑхӑн хӑйӗннех илмелли ҫинђен, хресђенсен тата ӗҫлекенсен хӑйсем укҫитенкине ҫак ӗҫе хурса патшалӑха пулӑшма кирли ҫинђен тата ҫав вӑхӑтрах орканисатсиленсе айалти копператтивсем урлӑ хӑйсем вађђи тырпул илсе хатӗрлемелли ҫинђен пӗтӗм хресђен массине тӑнлантарса парасси, пирӗн парттин, Совет влаҫӗн тата уйрӑм кашни парттийтсӑн умри сатађђи пулаӑ. Ку ыйту ҫинђен ОК пленӑмӗ постановленией йышӑнђӗ, ђухӑнсене тырпул кӳрсе парасси ҫинђен те кӑтартса пађӗ. Ҫак постановленисем тӑрӑх халӑха тырпул кӳрсе парасси йенђен майсем тупма тӑрӑшас пулаӑ.

Пирӗн шутпа, Ђӑваш Респуплӗкӗнђи ӗҫлекенсемпе хресђенсем тӗслӗрен промышлӗннӑҫ таварӗсене 13.500 пин тенкӗллӗх илме пултараҫҫӗ. Промышлӗннӑҫ таварӗсене кӳмелли йенђен, пленӑм, мӗншӗн вара, ҫак ђыхвӑра тӗсесе хунӑ? Акӑ мӗншӗн. Ку ђыхвӑр, шутланӑ тӑрӑх, пирӗн хресђен халахӗ тӳлеме пултаракан ђыхвӑр. Пирӗн ӗҫлекенсемпе хресђенсем ҫакӑн ђухлӗ укҫаллӑх промышлӗннӑҫ таварӗсене илме пултараҫҫӗ.

Халӗ тата пирӗн Респуплӗк ҫак промышлӗннӑҫ таварӗсене йепле майпа валеҫме шухӑшлаӑ?

Ку ыйтӑва пленӑм ак ҫапла татрӗ. Таварсене пур орканисатсисем урлӑ та сутӑнтармалла: копператси урлӑ 70%,

патшалӑхӑн сутуилӳ оркӑнӗсем урлӑ 20%, тата хӑй тӗллӗн сутуилӳ тӑвакан ҫынсем урлӑ 10%. Хӑй тӗллӗн сутӑ тӑвакан ҫынсем пирӗн Респуплӗкре йышӑннӑ пур правӗлсене те пӑхӑнса тӑмалла пулаҫҫӗ: ытти орканисатсисем сутакан хакран пӗр пус та хӑпартса сутма пултараймаҫҫӗ.

Епӗр пленӑмра килӳпе кайу шутне илес йенђен ӗҫлесе пӑхрӑмӑр, тырпулпа выђӑх апађӗн хисепне те тӗсесе хутӑмӑр. Вара пленӑм — пирӗн тырпул йенђен тефитсит, ҫавӑнпа пӗтӗм парттин, пӗтӗм халӑхӑн (ӗҫлекенсемпе хресђенсен) ҫак ҫитменлӗхсене йепле те пулин ҫӑмӑлтарах иртерме тӑрӑшмалла, — тесе йышӑнђӗ.

Тата патшӑлӑхпа халӑхӑн пурӑнӑҫӗ ыррипе усаллине кӑтартакан тӗкӗр — пирӗн пӳтшет. Пӗтӗм Совет Сойусӗн пӳтшеђӗ кӑҫал 4.678,5 мӗлйун тенкӗ шутланса тӑраť.

1923—24 - мӗш ҫулта пирӗн пӳтшет 2.228 мӗлйун тенкӗ ҫеҫ пулнӑ. Пӗр виҫӗ ҫул хушшинђе пирӗн пӳтшет 100% ытла хӑпарђӗ.

Епӗр ку йенђен паллӑ ҫӗнтерӳсем куратпӑр. Халӗ пӳтшет ыйтӑвӗ питӗ пысӑк ыйту, мӗншӗн тесессӗн, ку таранђђен епӗр хамӑр укҫана тыткалама вӗренеймерӗмӗр. Хӑшӗсем — йепле пуҫне килнӗ ҫапла тыткалаҫҫӗ: укҫатенкӗ йенђен хытӑ тистсиплинӑ кирлине манса, унпа шутланмасӑр, вӗсем кассӑри укҫана илсе, ӑна кирлӗкирлӗ мар ҫӗрех сапаҫҫӗ. Халӗ ҫакӑн пек килӗшӳсӗрлӗхсемпе кӗрешес пулаť. Малтан кӑтартнӑ пӳтшета пурӑнӑҫа кӳртме тӑрӑшас пулаť, кӑтартнӑ расхутсене вырӑнлӑ тӑвас пулаť. Хӑшхӑш йулташсемшӗн ҫакӑ, кивӗ сӑмаха тепӗр хут асӑннӑ пек, туйӑнаť пулӗ. Пирӗн ҫакна лайӑхрах пӗлсе, ӑнланса илес пулаť те, пурӑнӑҫа кӳртме хытах тӑрӑшас пулаť.

Сойус пӳтшетӗнђе промышлӗннӑҫа пулӑшма 380 мӗлйун тенкӗ тӗсесе хунӑ, халӑх хуҫайствине пулӑшма — 493 мӗлйун тӗсенӗ. Ҫапла вара пӗтӗм халӑх хуҫайствине сарма милйарта ҫывӑх уйӑрса хунӑ. Ку пирӗн йалхуҫайствипе промышлӗннӑҫа хӑпартма пӗр милйарт тенкӗ пӳтшетран кӑларни пулаť, ҫавах тата, тепӗр йенђен, ҫак укҫа опоротра пулас ҫуккине пӗлтерет. Ҫак промышлӗннӑҫа хӑпартма опоротран кӑларнӑ укҫа пирӗн пӳтшетра ан палӑртӑр тесессӗн, пирӗн пӗтӗм вӑйа шӑнарса

ĕçлемелле пулаť. Ку йенђен партти мĕн тумаллине кăтартса пађĕ, парттипе влаçăн çакна пурăнăçа кÿртесси çеç йулаť.

Халĕ тата Ђăваш Респуплĕкĕ пÿтшетне пăхăпăр. Пирĕн вырăнти пÿтшета пленăм пăхса тухрĕ те 5.514.000 тенкĕ тĕсесе хуђĕ. Çак пÿтшета тефитситсăр тунă, унта тупăшпа тăкак танашаççĕ. Тупăш йенђен пур майсене те шута илнĕ, çавăпа та, пленăмра йулташ Лаврентйĕв каланă пек, епĕр финанс хĕлĕхне кăштах хăпартас тесессĕн те, вăл татăлса кайма пултараť. Пÿтшета тупăш йенђен пур майсене те шута илсе çак виçепе тунă, çавăнпа та ку пÿтшета пĕр сăмахсăрах пурăнăçа кĕртсе пуçтармаллине, халиђђен пулнă йĕркесĕрлĕхсем пулма кирлĕмаррине ĕçе йертсе пыракан çынсен астуса тăмалла.

Мĕн те пулин тума тĕсесе хунă укçана тепĕр хут пăхса тухса валеçме тата пĕр ĕç вађђи панă укçана тепĕр ĕçе йама, пăрахмалла. Епĕр решшенисем йышăнма çеç мар, вăл решшенисене пурăнăçра ĕçе кÿртме те пултарнине, пирĕн кăтартса парас пулаť.

Пирĕн Ђăваш Респуплĕкĕ пÿтшетне тефитситсăр тунă пулсассăн та, çапах хамăр Респуплĕк хушшинђе тухма тĕсесе хунă укçа тенкĕ пĕтĕм пÿтшетăн 43,8% анђах пулаť, ку çуринђен те кайарах шугланса тăраť. Çакна та манмалла мар. Ђăваш пÿтшетне епĕр 43,8% хуратпăр, ытти 56,2%, пирĕн вырăнти пÿтшета, ђенттăр хураť. Кунсăр пуççăр, пĕтĕм Сойус пÿтшетĕнђен кĕрекен укçа 1.912.480 тенкĕ шутланса тăраť. Пирĕн Ђăваш Респуплĕкне тытса тăрса пулăшма Совет Сойусĕ çакăн ђухлĕ нумай укçатенкĕ тăкаť.

Ĕçлекенсемпе хресђенсен влаçĕпе партти екпономĕк йенђен питĕ кайа йулнă Респуплĕке сăмахпа анђах мар, ĕçпе, ытти районсенђе пурăнакан халăхран пухакан укçана ђăваш пÿтшетне хурсах, пулăшаť. Йулташсем, çакна манмалла мар. Пĕђĕккĕн ĕçе хăпартса укçана пĕтĕм Сойус кăсйинђен мар, унăн кăсйине хумалла тума тăрăшмалла. Епĕр халĕ Сойус пÿтшетне 2.386.000 тенкĕ хыватпăр, анђах ку укçа, пире Сойус Правиттĕлстви паракан укçана витеймест. Çакăн çинђен пирĕн ĕçлекенсемпе хресђенсен массине каласа тăнлантармалла. Пирĕн хресђен—ăна пулăшмаççĕ, унтан налук

илеççĕ, тесе—пăшăрхансассăн, ĕçлекенсем тата—ĕçхакне сахал параççĕ,—тесессĕн, пĕр сăмахпа, халăх хушшинђе килĕшменлĕхсем пулсассăн,—парттин тăнлантарса, апла маррине кăтартса парас пулаť. Ĕçлекенсемпе хресђенсен влаçĕ ку вăхăтра вăйĕ, пултарăвĕ çитнĕ таранђђен Ђăваш Респуплĕкĕ нушине хирĕç пыраť, ку тĕрĕссине епĕ кăтартнă ђыхвăрсем лайăх çирĕплетеççĕ.

Малалла. Епĕр хамăр пŷтшет пурлăхĕпе йепле усă курас тетпĕр? Епĕ куна кăтартакан ђыхвăрсем çинђе тытăнса тăмастăп, тŷрех тĕп ђыхвăрсене кăтартса паратăп.

Ђăн малтан, кун çинђен партти мĕн каларĕ? Вăл—атминистратси вађђи тумалли расхутсене пĕр хĕрхенмесĕрех сахаллатмалла, ђакармалла,—терĕ. ОК пленăмĕ çакна асра тытса тăрса, пĕтĕм атминистратсиллĕх расхутсене, пĕлтĕрхинђен шутласассăн, 18% ђакарђĕ. Капла пулсассăн, ОК пленăмĕ майсем пур таранђђен партти хушнине турĕ. Тепĕр йышши расхутсене хăпартрăмăр: Халăхăн Çуткомиссариатне 16%, Сывлăх Комиссариатне 35%, йалхуçайстви вађђи 52%, промышлĕннăçа пулăшма 188% хăпартса патăмăр. Хăй умĕнђе тăракан ыйтусене татас ĕçре, пленăм тĕрĕс турĕши? Пленăм ку ыйтусене майсем пулнă таран, партти кăтартнине туса Ђăваш Респуплĕкĕшĕн пысăкрах, кирлĕрех ĕçсем вађђи: халăха вĕрентме, халăх сывлăхне сыхлама, йалхуçайствине хăпартма, промышлĕннăçа пулăшса тĕреклетме расхутсем нумайрах кăтартса пађĕ.

Çак малта кăтартнă тумалли ĕçсем малалла хăйсене пурăнăçа кŷртнĕ ђух пŷтшет тистсиплинине хытă астуса ĕçлессе кĕтеççĕ. Çавăнпа та çакна халăха тĕсеттерсе пани кирлĕ. Халăха вăхăтра, кирлĕ таранах пулăшу парасси, халăх хăй умĕнђе тăракан тŷлевсене вăхăтра тŷлеме тăрăшнинђен килет; вĕсем хăйсемех, çŷлтен хĕстерессе кĕтмесĕр тŷлев укçине вăхăтра леçсе панинђен килет. Пирĕн ĕçлекенсемпе хресђенсен Респуплĕкĕнђе камăнне те пулин килçуртри пурлăха çырса турки туса сутни питех те йăвăр йапала. Ку питĕ йапăх ĕç Массă куђттур йенђен питĕ кайа йулнинђен, ĕçлекенсемпе хресђенсен влаçĕ кăларакан текретсене вĕренсе ăнланманнинђен, пирĕн Совет йĕркин тĕп ăснетăнне пĕлсе

çитейменнинђен тата пирĕн Совет влаçĕ ĕçхалăхĕ интересĕшĕн çеç ĕçленине асăрхаманран анђах çакăн пек ĕçсем пулаççĕ. Миттĕнкра мар, токлатсем туса та мар, кашни кунри ĕçре халăха вĕрентсе, ăна тăнлантарасси, вĕсене ĕнентерсе шантарасси, парттийтсăсен ĕçĕ.

Йулташсем, епĕр çапла ĕçлесессĕн тин пирĕн хушăмăрта вара çакнашкал ђирђĕрсем йулмĕç.

Ĕçлекенсемпе хресђенсен влаçĕ ђухне, пĕтĕм халăх хушшинђе анђах мар, парттийтсăсем хушшинђе те вăрă ĕçĕ тата тĕслĕрен усал ĕçсем туни палăрни, йăвăр мари вара? Респуплĕкри влаçе йертсе, .кăтартса пыракан парттире, Коминттерна йертсе пыракан парттире тĕслĕрен усал ĕçсем тăвакан çынсем кирлĕ мар, ку ирсĕрсем малалла пулмалла мар, пирĕн — револ̡утсионерсен, пол̡шевиксен çакăн пек елементсем ан пулђђăр, тесе—питĕ хытă кĕрешмелле, ун пек çынсене парттирен кăларса ывăтма та хĕрхенмелле мар.

Тирпейлĕх решимĕ компаңийĕнђи çитменлĕхĕсемпе çĕнтерӳсем çинђен парттипе совет орканисансийĕсем патне Стал̡ăн. Рыккăв тата Куйпышшĕв йултащсем ала пусса авкустăн 10-мĕш кунĕнђе йанă хутра, акă мĕн тенĕ: „тĕрлĕрен ирсĕрлĕхсене, тирпейлĕх решимне ăрасна майлă тума хăтланнине, тирпейлĕх решимне пурнăçа кӳртнĕ ĕçре йапăх ĕçлени палăрнине, тĕслĕрен — йе кĕрет, йе вăрттăн тăвакан усал ĕçсене парттипе правиттĕлствă пĕтерме хушаççĕ, вĕсене нихăçанта кайалла çавăрăнми пĕтерсе хума ђĕнеççĕ“.

Малта кăтартнă йĕркесĕрлĕхсем малалла та пулсасăн, парттипе правиттĕлствă çакăнта айăплă çынсене хытă хĕстермеллине малтанах каласа хураççĕ.

Çак ирсĕрлĕхсене пĕтерес йенђен ку таранђђен те малалла та çителĕклĕ тăрăшса ĕçлемен комуниссене парттирен намăслантарса хуса кăлармалла, тет партти.

Пирĕн хушăмăрти ђирђĕрсене пĕтерес ыйтăва парттипе влаç çапла татса хунă. Епĕр те халĕ çаксене пĕтĕмпех пурăнăçра ĕçе кӳртес тесе çителĕклех ĕçлеместпĕр. Йултащсем, хамăр партти хушшинђе çак ђирсемпе ђирлекен çынсем пур ђухне, епĕр револ̡утсиллĕ саккунлăха массă хушшинђе çирĕплетес йенђен ăçтан ĕçлеме пултарăпăр? Çак ђирсене тасатасах

пулаť. Халĕ хамăр пÿтшет çинђен калаçнă ђухне, хамăр Ђăваш Республĕкĕпе пĕтĕм Сойус хуçайстви ĕçĕсене пăхса тухнă вăхăтра, пирĕн малаллахи йăвăр сатађсене тунă ђух тĕслĕрен çитменлĕхпе кăлтăксене пĕтермеллине умрах тытса тăмалла. ЕÇП-ăн малтанхи вăхăтне тырпул çитменни çинђе тытăнса пурăнса иртертĕмĕр. Унђух пирĕн тырпул та çитмесђĕ, ĕç укçине те питĕ сахал парађђĕç. Халĕ вăл çук, анђах халĕ çĕнĕрен çитменлĕхсем, йăвăрлăхсем сиксе тухрĕç: ку — пирĕн промышлĕннăçа сармалли ĕçпе çыхăннă йăвăрлăхсем. Çак йăвăрлăхсем пирĕн укçатенкĕ çитменнипе лайăх ĕçлеме пултаракан çынсем çуккипе пулма пултараççĕ.

Пирĕн çĕнтерÿсем çинђен каланă ђухне мĕнле çитменлĕхсем пурри çинђен те калас пулаť. Хуçайствă ÿснипе пĕрле ђаснăй кăпитал та ÿсет, йалти хирĕçÿ хăпарса пыраť, пĕђĕккĕн çĕнĕ пуршуаçи çуралаť. Çак хĕрлĕ сăрпа сăрланнă çĕнĕ пуршуаçи политтĕк прависене илесшĕн питĕ сисмелле мар майсемпе кĕрешме пултараť, çакна манас пулмасť. Çĕнĕ пуршуаçин сассине вăйлăлатакан трупа, — оппоçитси пулса тăраť. Çаксем пирĕн ĕçе йăвăрлатаççĕ. Уйрăм хамăр респуплĕке илĕпĕр. Ђаснăй кăпитал алăстисемпе, пирĕн айалти копператсипе пĕрлешни çине тата йалхуçайстви копператсийĕ ђаснăй кăпиталпа çыхăнса тĕрлĕрен ĕçсем туни çине епĕр питĕ сахал пăхатпăр. Револђутсин 9-мĕш çулĕ пĕтмĕшĕнђе, хамăр пĕђĕккĕн те пулин ÿссе пынă вăхăтра, пурнăçа вăхăтлăх лайăхлатас шухăшпа ђаснăй кăпитала хăпартни йурамасť, çакна тăнласа илсе пĕтерме тăрăшас пулаť.

Мĕн кирлине сутманни, мĕн кирлине илменни тата сутмалли тавара кама сутма кирлĕ çавна сутманни пирĕн хушăмăрта пулкаланине кунта ларакансем пурте пĕлеççĕ. Çак йăвăрлăхсем пирĕн партти ĕретĕнђе тĕрексĕрлĕх çуратаççĕ, çавăнпа та парттин 14-мĕш сиесĕнђен вара пирĕн оппоçитси пур.

Çакăнпа хам токлатăн малтанхи пайне пĕтерсе, малалла тепĕр йышши ыйтусем çине, парттин шалти пурнăçĕпе оппоçитсин çĕнĕ пĕрлешÿ çине куçатăп. Парттин 14-мĕш сиесĕђђенех партти хушшинђе уйрăм пĕрлешÿсем пурђђĕ, анђах вĕсене йĕртсе пыракан пуçсем çукђĕ. Халĕ епĕр лайăхах палăрнă оппоçитси пĕрлешĕвĕ пуррине куратпăр, унăн пуçĕнђе

Тротски тăрат. Çакă оппоçитси пĕрлешĕвĕ. хăйĕн пуçĕ йертсе пынипе, пирĕн парттийе уйăрмалли политтĕкпа ĕçлет. Йулташсем, пирĕн парттин историнђе хаљхи пек ĕçсем пулман: Тĕп Комиттет Политтĕк Пӳровĕ ђленĕсем оппоçитсинђе тăрса кун пек ĕçленине илтмен.

Партти кунĕсенђен пĕринђе, Мускавра оппоçитси йађђейккăсене саланнă та, унта тискуççи уçмалла, тесе ыйту лартнă („Авиоприпор" йађђейккинђе). Ку тискуççи анаталла куçса пыракан парттийе çăлма кирлĕ; оппоçитси çакăн çинђен кĕретех тăрса калани, парттийе çăласшăн иккенне пĕлтерет, тенĕ вĕсем. Оппоçитсин çĕнĕ пĕрлешĕвĕ çапла лосăнк кăларса пăрахса, тискуççи пуçласа йарса ĕçлеме шухăшланă, анђах парттийтсăсем — ĕçлекенсем, вĕсен тĕп шухăшне çавăрса илсе, каланă: — сирĕн ваљљи пирĕн йађђейккăра вырăн çук, пире тискуççи кирлĕ мар; епĕр парттин 14-мĕш сиесĕ йышăннă решшенисене пурнăçа кӳртес тесе ĕçлетпĕр; есĕр çапла ĕçлес мар теттĕр пулсассăн, кунтан кайăр. Тискуççи кирлĕ мар, оппоçитси кирлĕ мар, тенĕ. Ĕçлекенсем оппоçитсине çапла каланă. Пирĕн те Ђăваш Респуплĕкĕнђи парттийтсăсен çакна асра тытса, оппоçитсин çĕнĕ пĕрлешӳне хирĕç пĕр ђарăнмасăр парттин 14-мĕш сиесĕ йышăннă решшенисене вырăна кӳртме тăрăшас пулат, парттийтсăсене политтĕк тĕлĕшĕнђен вĕрентес пулат, ĕçлекенсене тата хресђенсене пирĕн промышлĕннăç йеплине каласа тăнлантарас пулат. Çакă пирĕн тĕп сатађ.

Оппоçитсин çĕнĕ пĕрлешĕвĕ парттине хирĕç халиђђен илтмен майсемпе ĕçлет: вăрттăн пухусем тăват, оппоçитси кăларакан литтераттура салатат, ђлента тăнăшăн укçасем пухат, хăйĕн çекретлă паллăсем пур т. ыт. те.

Парттипе кĕрешес ĕçре оппоçитсин çĕнĕ пĕрлешĕвĕ орканисатсиленнĕ вăйпах тухат: пĕтĕм парттийтсăсен хулари пухăвĕнђе, Шупашкар хулинђи активăн происвотствă канашлăвĕсен ыйтуне пăхнă ђухнехи пухура т. ыт. ОК пленăмĕ пирĕн оппоçитси пурри çинђен каларĕ, тата çак оппоçитси пирĕн хушăмăрти йăвăрлăхсемпе усă курса, фракси пек тухса тискуççи тума пултарат, терĕ. Çавăнпа та халĕ пирĕн умри сатађ — парттийтсăсемпе парттире тăман м а с с ă н а пирĕн

промышлённăç сотсиалисăм çулёпе пыракан промышлённăç иккенне кăтартса тăнлантарса парасси, парттин 14-мёш сиесĕ йышăннă решшенисене пурнăça кӳртме тăрăшасси, парттийтсăсене политтĕк тĕлĕшĕнђен вĕрентесси.

Халĕ оппоçитси орканисатсиленсе тухса парттипе кĕрешме тапратасшăн. Халĕ епĕр, йулташсем, çапла ыйту лартăпăр:

## Оппоçитсин çĕнĕ пĕрлешĕвĕ мĕн тăвасшăн?

Вăл парттине пĕтесрен çăласшăн тени тĕрĕсши? Вăл парттине йăвăрлăхсенђен тухма пулăшасшăн тени тĕрĕсши? Епĕр куна хирĕç—çук, уншăн тăрăшмасť вăл, тетпĕр. Оппоçитси,—мушĕт хăй те сисмесĕрех—парттине сийен туса ĕçлет. Оппоçитси пĕрлешĕвĕ парттине пулăшас тет пулсан, унăн тĕреклĕ, паллă, Ленинла лини пулмалла. Анђах вăл лини çук. Оппоçитси пĕрлешĕвĕн ун пек лини пулма та пултараймасť: Тротски йул. пĕрмайах хăйĕн перманентлă револђутсийĕн теорипе, тата тĕнђери револђутси ђас çитмесен хресђен контр-револђутсийĕ пулас теорипе çапкаланса çӳрет. Каменĕвпа Çиновйĕв йулташсем Октăпĕр Револђутсийĕ кунĕсенђех, партти тăшмансемпе хăрушă çапăçнă вăхăтра, Октăпĕр Револђутсийĕ çĕнтерессе шанмасăр, тарнă. Шљапнĕккăв й. ђи йăвăр кунсенђе хăйĕн ĕçне пăрахса тарнă. Халĕ çав йăвăр вăхăтра иккĕленекен, çапăçуран пăрăнса пытанаканнисемех, парттин 14-мĕш сиесĕнђе пирĕн промышлĕннăç сотсиалисăмла промышлĕннăç иккенне, пирĕн çĕршывра сотсиалисăм тума май пур иккенне ĕненмесĕр иккĕленсе тăђĕç. Пирĕн умри çĕнĕ йăвăрлăхсем курăна пуçласан, кивĕ хатĕрсем пĕтсе çитсен, хапрăк савăтсем пĕтĕмпе пекех ĕçе кĕрсен, пирĕн умма çĕнĕ промышлĕннăç тăвас сатађсем сиксе тухсан,—çав çынсемех умри йăвăрлăхсенђен тарма хатĕр. Çакă пĕр пĕрлешӳ пулса тăракан оппоçитси пирĕн çĕршывра сотсиалисăм тума май пуррине ĕненмест, вăлах тата пирĕн совет влаçĕн характĕрĕ пирки те иккĕленет, мĕншĕн тесен, совет патшалăхĕ пролеттари класĕн патшалăхĕ иккенне йышăнмасť. Вĕсем—пирĕн совет влаçĕ—пролеттариат тиктаттурĕ мар, ĕçлекенпе хресђенсен (пуршуаллă—темократтиллĕ) патшалăхĕ анђах, теççĕ. Çапла вара, пирĕн совет влаçĕн пролеттарилле характĕрне йышăнман

пирки, вĕсем ыттине те йăнăш шутлаççĕ: парттин мĕн пур политтĕкне те, парттин хăй хушшинђи ĕçсен политтĕкне те, йут халăхсен хушшинђи ĕçсен политтĕкне те, кунтан вара Коминтерн политтĕкне те йăнăш шутлаççĕ. Çапла вара, оппоçитси шутланă тăрăх, Ленин парттийĕ, Ленин парттийĕн Тĕп Комиттеђĕ кăтартнă тăрăх пулса пыракан тĕнђери револђутси хускалăвĕ те пĕтсе пыраť пулаť. Акă мĕнле ыйтусем параť пире оппоçитси, акă мĕнле лосăнксемпе пуçласа йађĕ вăл пирĕн парттири çапăçăва.

Йулташсем! епĕ оппоçитсин паллăрах уйрăмĕсем çинђе ђарăнас тетĕп.

Пирĕн çĕршывра сотсиалисăм тума май пуррине оппоçитси йышăнмасť. Апла пулсан Окťапăр Револђутсине те йышăнмалла мар, апла пулсан Окťапĕр Револђутсине тума та кирлĕ пулман, апла пулсан епĕр, хамăр çĕршыв кайа йулнине кура, пĕтĕм тĕнђери револђутси пулађђен ђăтса тăраймастпăр пулаť. Тротски й. ĕлĕкех акă мĕн калађђĕ: Раççейре револђутси пулса, ĕçлекенсем влаçа хăйсен аллине илсен те, пĕтĕм тĕнђипе револђутси пулмасан, хресђенсем ĕçлекенсен влаçĕн пуçне çĕмĕрĕç, мĕншĕн тесен, хресђен вăл—вак пуршуа, теђђĕ. Оппоçитси ЕÇП-е кайалла ђакни анђах тесе шутлаť, епĕр пĕрмайах ђакатпăр та ђакатпăр, полђшевиксен влаçĕ кайран кайран пуршуа влаçĕ патнех шуса анĕ, тет. Ку каллех Окťапĕр Револђутсине йышăнманни, пирĕн халђхи—ЕÇП вăхăтĕнђи çĕнтерӳсене тĕрĕс хисеплеменни пулаť. Унтан тата оппоçитси пирĕн промышлĕннăçа патшалăх кăпиталисăмăн промышлĕннăçĕ, тесе хисеплет. Апла пулсан кунта експлуаттатси паллисем пулмалла, мĕншĕн тесен, кăпиталисăм йĕркисенђе експлуаттатси йаланах пур; експлуаттатси пур пулсан классен кĕрешĕвĕ те пулас пулаť. Çапла вара, оппоçитси вĕрентнĕ тăрăх, пирĕн пролеттариат хамăр промышлĕннăçа кăпиталисăмла промышлĕннăç вăл, тесе хисепленĕ пирки, патшалăхпа, патшалăх промышлĕннăçĕпе класла тăшманпа çапăçнă пек çапăçмалла пулаť.

Парттин кăштах тавçарса илекен ђленĕ те куна ăнланмасăр тăма пултараймасť. Пĕтĕм промышлĕннăç тупăшлăхĕ, пĕтĕм ресђентен илекен йалхуçайстви налукĕ уйрăм çынсен кĕсйине

мар, пĕр патшалăх хуранне кĕрет пулсан, çав пĕрле хурантан анђах—кирлĕ пулнă майĕпе—хăшпĕр ĕçе йусама саланаť пулсан—вара вăл пирĕн промышлĕннăç кăпиталисăмла промышлĕннăç пулни пулђĕши? Кунта та оппоçитси йунăшаť, Окťапĕр Революутсине йышăнман шухăш йеннелле шуса анаť. Унтан тата оппоçитси ĕçлекенпе хресђен хушшинђи сойуса ђăннипе йышăнмасť, вăтам хресђенпе тăвас сойуса йышăнмасť. Вăл пĕрмайах партти кулак йеннелле сулăнаť, тесе çĕмĕрлет, хăй вăтам хресђене йăлтах куçран çухатнă. Вăтам хресђен ытти хресђен хушшинђе мĕн вырăн йышăнса тăнине курманран, оппоçитси копператси мĕне пĕлтернине йышăнмасť. Копператси çинђен Ленин йулташ каланă: „хресђенĕн тĕп масси—ђухăнпа вăтам хресђен—копператсине çирĕплетсе, копператси урлă сотсиалисăм тумалла, тенĕ, копператси сотсиалисăм çитес вăхăта васкатса пымалла“, тенĕ. Унтан тата оппоçитси Совет патшалăхĕн пролеттарилле характĕрне йышăнмасť. Пирĕн влаç пролеттари влаçĕ мар пулсан, ĕçлекенсен класĕ пур йенђен те класла çапăçу тума тивĕçлĕ, çавăнпа та ĕçлекенсен класĕ Совет влаçĕпе кĕрешмелле пулаť. Кунта каллех Окťапĕр Революутси тĕп шухăшне йышăнманни курăнаť.

Малалла тата епĕр пире оппоçитси пўрократтисăмшăн айăпланине куратпăр. Анђах вăл пўрократтисăмшăн патшалăх аппаратне анђах мар, партти аппаратне те айăплаť, çитменнине тата ђирсемпе айăпсене пĕтересшĕн анђах мар, пирĕн парттин аппаратне, патшалăх аппаратне пĕтерессшĕн кĕрешет. Кун пек хăтланни вăл малашне патшалăх аппаратне партти пахаласа тăрас ĕçе ђарма пултараť. Йулашкинђен, оппоçитси парттин пур постановленисене хăйĕн ĕçĕсемпе пăсса пыраť, пирĕн парттине хирĕç тăраť.

Епĕ оппоçитсин хăшпĕр уйрăмĕсене палăртса патăм, пирĕн тата оппоçитси пĕрлешĕвне камсем кĕнине пĕлес пулаť. Ку пĕрлешўре тĕрлĕ тĕслисем—Метветĕвпа Шљапнĕккăвран пуçласа Тротскипе Çиновйĕв таран—пĕрлешсе тăни çинђен епĕ каланăђђĕ. Оппоçитсин çĕнĕ пĕрлешĕвĕн пуçлăхĕсем мĕнле çынсем? Вĕсем аван ĕçленине, литтераттур тĕлĕшĕнђен аван ĕçлеме пултарнине епĕр, йулташсем, пĕлетпĕр. Вĕсем нумай

çул парттин литтераттурла, парламĕнтла çапăçăвĕнђе пулнă, вĕсен çак литтераттур фронтĕнђе çапăçма хатĕрĕсем те, пĕлнисем те çителĕклĕ. Анђах, йулташсем, çав пуçлăхсен пурин те пĕр çитменлĕх пур: вĕсем Раççейри классен çапăçăвне сывăхра, хăйсем аллипе туса курман, вĕсем йаланах йут патшалăхра пурăннă, çавăнпа та патша вăхăтĕнђи хăрушă çапăçусене хăйсен çурăмĕ çинђе тўссе курман. Нумай çул йут патшалăхра пурăнни вĕсем çинђе палăрса тăрать, çавăнпа та партти умĕнђе ђи йăвăр сатађсем тăнă вăхăтра парттин пĕртенпĕр ыйтăва татăклă йышăнса ĕçлеме тытăнас вăхăтра, вĕсем хушшинђе иккĕленни, хăйсен ĕçĕсене пăрахса тарма хăтланни курăнать. Тĕп Комиттетпа унта ĕçлекенсене пăхăпăр. Кунти партти ђленĕсем Раççейри револђутсисен хăрушă кĕрешĕвне курнă, вĕсем револђутси ĕçĕн ăстисем, револђутсин çирĕп паттăрĕсем. Вĕсем хăйсен çурăмĕ çинђе парттин пĕтĕм йăвăр ĕçĕсене, реаксин пĕтĕм йăвăрлăхне тўссе курнă. Çавăнпа та кунта тĕреклĕх, пĕрлешўллĕх, парттин сатађђисене тăвас çĕрте - çирĕплĕх, йăвăрлăхсене ђăн полђшевиксем пек çĕнтерсе пыни курăнать.

Оппоçитсин çĕнĕ пĕрлешĕвĕ çинђен калаçнă ђух пирĕн умра авалхи карттин курăнать. Ку пĕрлешў пире 1912—14-мĕш çулсенђи авкустри пĕрлешўне аса илтерет.

1905 — 1907-мĕш çулсенђи хăрушă реакси хыççăн, пĕтĕм револђутси хускалăвĕ вăрттăн анђах ĕçлеме пуçланă хыççăн, тĕрексĕр, вак пуршуаçилле, ĕççынни класĕпе пĕрле çапăçма хăнăхман револђутсионерсем револђутси çулĕ çинђен айаккалла пăрăнса кайнă хыççăн,—1912-мĕш çулта каллех револђутси хускалăвĕ ўсме тытăннă; вак пуршуаçилле интелекентси те вăл хускалăва хутшăнма шутланă. Анђах полђшевиксем шуĭ туса хăтланманнине курсан, вĕсем „патша йĕркийĕ тĕп пултăр“, „8 сехетлĕ ĕçлĕх кунĕ“, „помешђĕксен çĕрне туртса илмелле“ тенĕ лосăнксене курсан,— вĕсем, классен çапăçăвĕнђе йунпа вараланасран хăраса, 1912 ç. авкуст уйăхĕнђе пĕрлешў тунă. Вăл пĕрлешўн пуçлăхĕ Тротски пулнă, вăл пĕрлешĕве Ленинпа çапăçма, полђшевиксемпе çапăçма, револђутсилле хускалăва пуршуаçи йĕркинђен кăларса йарас мар, тесе тунă. Ленин йулташпа пирĕн партти вăл авкустри

пӗрлешӗве хирӗç питӗ хытӑ çапӑçнӑ, вӑл çапӑçура Тротски йут патшалӑхри хамӑрӑн тӑшмансен кӗнеки-хаçаҕӗсемпе те усӑ курма вӑтанман, Ленина усурпаттӑр, тенӗ т. ыт. Çапах та, çав йӑвӑрлӑхсене пӑхмасӑр, парттине Ленин тӳрӗ çулпа йама пӗлнӗ, парттин пӗрлелӗхне çухатман. Çавна кура халӗ епӗр влаçа хамӑр алра тытатпӑр, тӗнҕери револютси хускалӑвне çул кӑтартса пыратпӑр. Патша йӗркине çӗмӗрсе тӑкас ӗçре ун ҕухне йӑвӑрлӑхсем нумай пулнӑ. Çавӑнпа та иккӗленсе тӑракансем сапӑçуран пӑрӑнса авкустри пӗрлешӳ туса хунӑ. Халӗ пирӗн умра хамӑр хуçайствӑна çирӗплетес ӗçӗн йӑвӑрлӑхӗсем. Çавӑнпа та иккӗленекенсем унталла-кунталла шутлакансем, сотсиалисӑм тӑвас ӗçе ӗненменнисем çапӑçуран пӑрӑнса, оппоситсин çӗнӗ пӗрлешӗвӗ туса хуҕӗç. Паллах ӗнтӗ çав оппоçитсин çӗнӗ пӗрлешӳне хирӗç пирӗн хытӑ кӗрешмелле пулат. Парттин Тӗп Комиттеҕӗпе Тӗп Контроҕ Комисçин пленӑмӗнҕе Çиновйӗв й. „ҕӑннипе, нумайлӑха“ тенине асра тытса тӑмалла, мӗншӗн тесен, вӑл сӑмахсене ахалех калас çук. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен, оппоçитсин çӗнӗ пӗрлешӗвӗ мӗн вӑй çитнӗ таран хӑй ӗçӗсемшӗн пирӗн парттипе çапӑçса пырӗ. Оппоçитсин çӗнӗ пӗрлешӗвӗн тӗп çӗмӗренӗ хӑш йенелле çӗмӗрсе пырат? Тӗпри çӗмӗрен халӗ пуринҕен малтан партти аппаратне хирӗç пырат. Оппоçитси халӗ Тӗп Комиттета айӑплама тӑрӑшат, парттин куна асра тытмалла, мӗншӗн тесен, ӗлӗк те, тӗрлӗ оппоçитсисем пирӗн парттипе кӗрешнӗ ҕух, тата ӗлӗкрех меншевиксемпе тӗрлӗ „туссем“, пуринҕен малтан партти аппаратне хирӗç тӑнӑ, ӑна туртса илесшӗн, туртса илме май килмесен, çӗмӗресшӗн пулнӑ. Унтан тата оппоçитси партти решимне улӑштарасшӑн тӑрӑшат, апла туни вӑл оппоçитсин çӗнӗ пӗрлешӗвӗ партти аппаратне çӗмӗрсе, çӗнӗ аппарат тума пикеннине пӗлтерет. Вӗсен ӗçӗсем çине çапла анҕах пӑхма тивӗçлӗ. Ӗлӗк авкустри пӗрлешӳ вӑхӑтӗнҕе, Акçелрот партти решимне улӑштармалла, парттире револютси тумалла, тесе кӑшкӑрнӑ ҕух, Ленин й. Акçелрот партти аппаратне çӗмӗрме тӑрӑшат, тенӗ. Халӗ те оппоçитси пирӗн партти ӑшӗнҕе çӗнӗ аппарат тума тӑрӑшат, ӑна тума май килмесен, парттирен уйӑрӑлса çӗнӗ партти тума тӑрӑшат. Çавӑнпа та, оппоçитсине хирӗç тӑрас тесен, парттин

постановленисене питĕ тĕплĕ, тăрăшса вĕренсе пымалла, вĕсене лайăх ăнланса илсе, хамăр çĕршыва интустрилас ĕçе пĕр канмасăр пурăнăçа кӳртсе пыма тăрăшмалла.

Оппоçитсин çĕнĕ пĕрлешĕвĕ хăйĕн шухăшĕсене пурăнăçа кӳртсе пымашкăн мĕн мĕн тăват? Пуринђен малтан вăл хăйĕн ĕçĕпе пирĕн партти тистсиплинине пăсса, устава хирĕç пырса, круппăсемпе фраксисем тумашкăн ирĕк пултăр тесе ĕçлет, ыттисене те усал пример кăтартат. Пирĕн хăшпĕр йулташсем, мĕншĕн пирĕн партти ăшĕнђе уйрăм круппăсем тума йурамаст? теççĕ. Мĕншĕн хăшпĕр партти ђленĕсем хăшпĕр ыйтусем пирки уйрăм постановленисем йышăнма пултараймаççĕ? теççĕ. Куна хирĕç Рыккăв й. çапла калат: „Ыйтăва кун пек тытни тĕрĕс мар. Вăл тĕрĕсмарлăх парттине фетератси тесе шутланăран, тĕрлĕ йухăмсен, фраксисен, круппăсен сойусĕ тесе шутланăран, вĕсен пуçлăхĕсем пĕрпĕринпе килĕшӳсем туса ĕçленĕ пек шутланăран пулат. Вăл тĕрĕсмарлăх парттипе фраксине пĕр тан шухăшлат, парттин Тĕп Комиттетне пĕрлешӳллĕ оркăн, хăй майлă пĕрлешӳллĕ партти министерстви тесе, уйрăм платформăллă фраксисемпе круппăсен претставиттĕлĕсен пухăвĕ тесе шутлат. Кунпек шухăшсем вĕсем парттин тĕп принтсĕпне, сахаллăннисем нумайăннисене пăхăнас принтсипне йышăнманран, урăхла каласан, партти пурĕпĕр уйăрăлса каймалла, тенĕрен тухаççĕ. Пролеттариатăн комунисла парттийĕн ирĕкне пĕлес çĕрте пĕртенпĕр тĕрĕс, пĕртенпĕр пролеттари майлă, пĕртенпĕр темократтиллĕ меттăт — парттин нумайăшĕ йышăнни. Урăх майлă шутлани, фраксисемпе круппăсен ирĕкне сыхлани — вăл партти çине интеликент-липералла пăхни пулат, вăл Ленин парттин тĕп принтсипне хирĕç пыни, пођшевик партин пĕтĕм орканисатсилле тратитсисене хирĕç пыни пулат.

Пирĕн партти вăл хамăрăн темĕн пысăккĕш çĕршыври тытăм йĕркине туса тăракан партти анђах мар, вăл тата пĕртенпĕр саккунлă партти. Çавăнпа та уйрăм ђленĕсем урлă, партти ăшĕнђи уйрăм ăрасна йухăмсем урлă парттин тулашĕнђи хирĕçӳсем паллă пулмасăр йулаймаççĕ, халăх хушшинђи пролеттариллĕ круппăсен класла интересĕсем

палăрса пымасăр йулаймаççĕ. Партти ăшĕнђи фраксисемпе круппăсен ирĕклĕ çапăçăвĕ — ђăннипе патшалăхри политтĕк парттийĕн çапăçăвĕ майлă пулса тăрать. Ку çеç те мар, партти ăшĕнђи фраксисен çапăçăвĕ вăл — патшалăхра тĕрлĕ парттисем тăвас çĕрти, пуршуаçилле темократтисăм тăвас çĕрти, первайхи утăм пулса тăрать. Тĕрĕссипе шутласан, партти ăшĕнђи тĕрлĕ интерессемшĕн тăрăшакан уйрăм шухăшлисем ăрасна фракси тума тăрăшĕç, хăйсен уйрăм тистсиплинă тăвĕç, парттин тĕпри оркăнĕсенђе хăйсен уйрăм претставиттĕлствисем тăвĕç, çапла вара парттин тĕп оркăнĕсем пĕрлешўллĕ оркăнсем пулса кайĕç. Çавăнпа та çĕнĕ оппоçитси „фраксисемпе круппăсен ирĕкĕшĕн“ тăрăшни ун йĕритавра пур парттине хирĕç вăйа пухса тăрать. Пирĕн парттире фраксисемпе круппăсем пулас пулсан, партти уйăрăлса кайнă пулĕђђĕ, пур орканисатсисем, уђрештенисем, пĕтĕм влаç уйăрăлса кайнă пулĕђђĕ. Çавăнпа та пĕртенпĕр тĕрĕс меттăт — вăл Ленинăн тимĕр пек хытă тистсиплинĕ, парттин ђленĕсенђен нумайĕшĕ сыхласа тăракан тистсиплинă.

Оппоçитси камăн шухăшĕ-кăмăлĕсене кăтартать: хăйсене анђахи, йе тата камăнне те пулин кăтартать? Совет влаçĕ ирĕкĕпе ўссе пыракан çĕнĕ пуршуаçи екким ономĕк тĕлĕшĕнђен кăштах тĕрекленнĕ; вăл хăйĕн пĕђĕкçĕ кăпиталне тата пысăклатма тăрăшать, анђах пролеттариат тиктаттурĕ хăйĕн хăвађĕпе, хăйĕн аппараđĕпе ўссе пыракан пуршуаçине пусмăрласа пырать, хăйне кирлине тутарса пырать, хăшђух, налуксем хурса, йе урăх хырăçсем туса ытлашши иртĕннисене ђарса, алурисене çыхса пырать. Çавăнпа та çĕнĕ пуршуаçи, оппоçитси йевĕрлех, партти решимне улăштарасси çинђен, Совет влаçĕн решимне улăштарасси çинђен шухăшлать; вăл влаçа хирĕç тăма тĕрлĕ майсем шырать, вăл хăйĕн сыхнă алурисене салтса йарасшăн, ку ĕçе тăвас çĕрте оппоçитси çине шанса пăхать. Çапла вара оппоçитсин çĕнĕ пĕрлешĕвĕ — çĕнĕрен тухса пыракан пуршуаçин шухăшĕ-кăмăлĕсене кăтартса тăракан пулса тăрать. Кунсăр пуçне тата **оппоçитсин çĕнĕ пĕрлешĕвĕ пирĕн шалти тăшмансемпе патшалăх тулашĕнђи тăшмансен кустăркăçне кустарать.**

Пирĕн йутри тăшмансем, меншевиксем, мĕн каланине пăхăпăр (шалти тăшмансем çинђе ђарăнса тăмастăп). Меншевиксен „Социалистический вестник“ йатлă шурналĕн 16, 17, 18-мĕш №№-сенђе акă мĕн çырнă: „оппоçитсин уттописăмĕ хыçĕнђе истори тĕлĕшĕнђен пăхсан прокреççивлă, малалла йаракан йапала курăнаť, пролеттариат тиктаттурне ишме пултаракан йапала курăнаť.“ Ку йапалана „хăлхасене ђăнк тăратса, пăхса тăмалла“, теççĕ. Çапла ĕнтĕ, меншевиксем каланă тăрăх, оппоçитси пролеттариат тиктаттурне çĕмĕрет, хăй мĕн тунине хăй те, мушĕт, пĕлмест. Малалла тата çав оппоçитси çинђенех: „пољшевиксен хушшинђен тухакан тĕрлĕ оппоçитсисен тĕрлĕ реаксиллĕ, вăрçă-комунисăмла, хресђене хирĕç пыракан уттописене епĕр йаланах криттĕкленĕ, критĕклетпĕр, малашне те криттĕклесе пырăпăр. Анђах çав итеолокисемпе ăрасна круппăсен шухăшĕсене криттĕкленĕ пирки, вĕсен тиктаттура пĕтермелли вăйсене пухса пынă çĕрти ĕçĕсене курмасăр йулни--калама çук пысăк йăнăш пулнă пулĕђђĕ“.

„Епĕр криттĕклетпĕр“, теççĕ меншевиксем: „анђах çав вăхăтрах, оппоçитси пролеттариат тиктаттурне çĕмĕрекен вăй иккенне манма кирлĕ мар“, теççĕ. Малалла тата: „оппоçитсин истори тĕлĕшĕнђен прокреççивлă ĕçĕ мĕнрен курăнса тăраť?“ Акă мĕнрен: 1) тĕрлĕ тĕслĕ оппоçитси елеменђĕсене пĕрлештерсе тăраканни вăл—партти решимĕпе партти аппаратне çĕмĕрес шухăш; çак пĕр шухăш пирки хресђене хирĕç Тротски те, хресђене май Сокколђнĕккăв та, сулахай Камĕнĕв та, сылтăм Метветĕв та, Коминттерншăн тăрăшакан Çиновйĕв та, ăна йышăнман Шљапнĕккăв та, пурте пĕрлешеççĕ. Оппоçитсин пĕр политтĕк, пĕр шухăш çукки çинђен меншевиксем те çыраççĕ. Оппоçитсири çынсем пĕр çав пролеттариат тиктаттурне çĕмĕрес шухăшпа, парттине хирĕç кĕрешес, парттин аппаратне пĕтерес шухăшпа анђах пĕрлешсе тăнине меншевиксем те пĕлеççĕ. Ку тĕлĕшрен оппоçитси пĕтĕмпех пĕр майлă, пĕр шухăшлă. Тата меншевиксем акă мĕн çыраççĕ: „оппоçитсине уйăрса тăракан еккономĕкла ыйтусене хыçала хăварса, вĕсене пĕрлештерсе тăракан Сталĕнăн çирĕп тиктаттурĕпе кĕрешес шухăшсене мала кăларса пыни оппоçитсине

пĕр шухăшлă туса, пĕрлештерсе тăраť“. Малалла вĕсем акă мĕн калаççĕ: 2) „оппоçитсин истори тĕлĕшĕнђен прокреççивлă ĕçĕсем тата акă мĕнрен палăраççĕ: оппоçитсин хаљхи патшалăх йĕркине криттĕклекен сăмахсем пĕтĕмпех меншевиксен сăмахĕсем пек илтĕнеççĕ“. Меншевиксем мĕн каланине оппоçитсири çынсем те çавăн пекех калаççĕ.

Малалла вĕсем çыраççĕ: „патшалăх аппарађĕпе партти аппараđĕ вак пуршуаçилле май пулса пырас ĕç йепле ўссе пыни çинђен оппоçитси мĕнле тĕрĕс, çивђĕ калаť! Пур çĕрте те ĕçсем аван тесе хăйне те, ыттисене те улталама тăрăшакан, хăй пуçне хăй хăйăр ăшне пытаракан парттин куçĕсем виттĕр мар иккенне мĕнле вĕсем вирлĕ кăтартаççĕ! Çав комуниссен партти ăшĕнђи виле шăршине, кăшт ирĕккĕнтерех шухăшсене мĕнле тĕптуса пыракан йĕркесене оппоçитси вăрçни мĕнле тĕрĕс йапала! Партти ăшĕнђи йĕркесем çавăн пек ђухне нийепле револђутсилле партти те хăйĕн умĕнђи историлле сатађсене нихăçан та тума пултарас çук, тенисем йепле тĕрĕс! Йулашкинђен тата, Совет патшалăхĕнђе пролеттари майлă мар елементсем ўссе пыни çинђен, вĕсем ĕçлекенсен класĕпе тўртĕн тăрса пыни çинђен, ЕÇП-ăн тăкакĕсене пĕтĕмпех ĕççыни ĕнси çине хурса пыни çинђен оппоçитси питĕ тĕрĕс кăтартса параť. Тытăм йĕркине туса пыраканнисем çакăн пек пĕтерсе хуракан криттĕке хирĕç, хаљхи Раççейĕн хуйхăллă пурăнăçне кăтартса паракан криттĕке хирĕç, мĕн калама пултарĕç. Нимĕн те çук“. (Социалистический вестник №№ 15, 16). „Оппоçитсин çĕмĕренĕсем мĕнле аван лекеççĕ, оппоçитси мĕнле çивђĕ, вăйлă тĕллесе, уçса параť, оппоçитси кăтартнисем мĕнле тĕрĕс“.

Çапла çыраççĕ меншевиксем. Вĕсем оппоçитси майлă, вĕсем оппоçитсипе пĕр ђĕлхеллĕ пулса пирĕн парттине криттĕклеççĕ.

Йулташсем, кам ваљљи çыраççĕши çав меншевиксем? Вĕсем пирĕн хушри меншевиксем ваљљи, Совет сойусĕнђе ĕçлекен меншевиксем ваљљи çыраççĕ. Кусем вара, йут патшалăхри Тĕп Комиттетран кăтартнă тăрăх, оппоçитсипе пĕрле, пирĕн парттине хирĕç, Совет влаçне хирĕç ĕçлеме тытăнаççĕ. Çавăнпа та оппоçитсипе пĕрле пирĕн парттин тăшманĕсем, Совет влаçĕн тăшманĕсем пире хирĕç пыраççĕ.

Пирĕн тăшмансем мĕн калани çинђен манăн маттериалсем татах нумай, анђах епĕ вĕсем çинђе ђарăнсах тăмăп. Катетсем мĕн калани çинђе кăштах ђарăнам: „лайăхи, лайăх мари пурĕ пĕр, оппоçитси ђи первайхи, ђи пĕђĕк ыйтăва та пулин, хаљхи правиттĕлствăн тиктаттурне хирĕç тăрас ĕçĕн ыйтăвне тăвать. Оппоçитси хушшинђе тиктаттура йышăнакансем нумай пулнине малашнехи... виççĕмĕш ĕçсенђе астума кирлĕ. Пайан оппоçитси тиктаттурăн никĕсне ђавать, кашни тухнă кĕнекерех оппоçитси „хăрушă“ сăмахсем каласа пырать. Оппоçитси патшалăх йĕркипе хирĕçес йеннелле сулăнать, епĕр ăна хавассăн йышăнатпăр, мĕншĕн тесен, оппоçитси хаљхи политтĕкпе килĕшменнисем ваљђи кăшкăрмалли трупа пулса тăрать“. Оппоçитси вак пуршуаçин итеолокийĕ майлă пулнăран, вак пуршуаçи парттипе влаçа хирĕç тăрас ĕçре усă курма пултарнăран катетсем хавасланаççĕ. Малалла катетсем çыраççĕ: „хаљхи вăхăтра Совет влаçĕн ђи хăрушă тăшманĕ вăл вăрттăн, сисмен хутран çавăрса илекен, Совет влаçĕ ĕлкĕређђенех ăна пĕтерсе хуракан тăшман. Ку ĕçе, Совет влаçне пĕтерме хатĕрленнĕ ђухне кирлĕ ĕçе, хаљхи советсен (Партти ăшĕнђи тесшĕн пулмалла) оппоçитсийĕ туса пырать“. (Посл. Нов. № 1983, авк. 27).

Çапла ĕнтĕ, катетсем каланă тăрăх оппоçитси Совет влаçне пĕтерес ĕçре питĕ аван ĕçлет, влаç оппоçитси аллине лекес вăхăта Совет влаçĕ пĕтсе лармалла. Акă мĕнле шутлаççĕ катетсем оппоçитси ĕçĕсем çинђен. Меншевиксем пирĕн патшалăх йĕркисем ђас улшăнмалла, тесе савăнаççĕ. Анђах пирĕн хуçайствă çирĕпленсе, промышлĕннăç ӳссе, партти йышлăланса пынине курсан, çук, улшăнусем пулмаççĕ пулĕ, теççĕ, парттипе влаç тĕреклĕ, теççĕ. Апла малалла мĕн пулĕши? Партти хăйĕн темократтисăмне хĕснĕçемĕн хĕссе пырать, çавăнпа та малашне партти улшăнса, влаç улшăнса пырĕ те, йулашкинђен Понапарттисăм пулса кайĕ, теççĕ. Çапла ĕнтĕ меншевиксем, пирĕн Совет влаçĕ улшăнса пынипе, пирĕн хамăрăн Понапарт пулса тăрĕ, теççĕ. Çапла калаççĕ пирĕн тăшмансем. Вĕсем çапла йурланине йут патшалăхсенђи ĕçлекен итлет. Ĕçлекене çавăн йышши хаçатсем ăшне варăнтараççĕ пулсан, вăл ирĕксĕрех тем тĕ пĕр шухăшлама пуçлать, тĕрĕс

сăмаха ҫасах шыраса тупаймасть. Йут патшалăхсенҫе пирĕн пек пĕрле пухăнса сўтсе йавма май ҫук. Комунисла парттисем унта та пур, пирĕн патра тĕрлĕ телекатсем те килсе кайаҫҫĕ, вĕсем пирĕн ҫинҫен ҫăннине каласа параҫҫĕ, анҫах оппоҫитси сăмахĕсем пирки ку ĕҫ питĕ йăвăрланать.

**Парттин мĕн тумалла?** Пирĕн пĕр пăркаланмасăр партти ăшĕнҫи темократтине асăлатса пымалла, ҫĕнĕ ĕҫлекенсем хатĕрлемелле, партти ҫленĕсене, ĕҫлекенсемпе хресҫенсене политтĕк тĕлĕшĕнҫен вĕрентсе, ҫутатса пымалла. Пўрократтисăмăн йулашки тĕрешкисемпе кĕрешмелле. Ленин йулташ пўрократтисăмпа кĕрешес ĕҫ ҫинҫен питĕ нумай шухăшланă. Оппоҫитси те пўрократтисăма хирĕҫ пек, хăш ҫух ытлашши те хирĕҫ.

Анҫах оппоҫитси, пирĕн аппаратсен ĕҫĕсене лайăхлатса, пўрократтисăма майпе пĕтерсе пырасси ҫинҫен шухăшламасть, аппарата пĕтĕмпех ҫĕмĕрсе тăкма тăрăшать. Умра йăвăрлăхсем пулсан вăл йаланах кайалла ҫакать, парттин тĕрĕс лининҫен пăрăнать.

Оппоҫитсин пирĕн патшалăх уҫрештенисенҫи пўрократтисăма криттĕкленĕ ҫухнехи майĕсене Ленин й. вак пуршуаллă майсем тенĕ. Ҫав вăхăтрах пўрократтисăмпа кĕрешес ĕҫ питĕ кирлĕ ĕҫ иккенне манмалла мар, тенĕ, вăл ĕҫ вак пуршуаҫипе кĕрешес ĕҫ пекех, тенĕ.

Епĕр, йулташсем, ку усал йапалана курса пырса, ҫитменлĕхсене пĕтерсе пырайратăри? Ҫук; ҫавăнпа та пирĕн ку ĕҫе вăйлăлатма тăрăшмалла.

Малашне пирĕн оппоҫитсин ҫĕнĕ пĕрлешĕвĕпе мĕн тумаллаши? Полит. Пўро ҫленĕ Тротски, Т. К. ҫленĕсем Ҫиновйĕвпа Пйаттакков парттине хирĕҫ ҫапăҫма тытăнҫĕҫ пулсан, пĕтĕм партти ушкăнĕпе, пирĕн орканисатси те, — пире тавлашусем кирлĕ мар, тесе, пирĕн парттине хирĕҫ ҫапăҫакансене епĕр ҫарма пĕлĕпĕр, тесе, пире тавлашусем мар, лăпкă, усăллă ĕҫ кирлĕ, тесе кăшкăрса каламалла (*алă ҫупаҫҫĕ*). Парттийĕн пуҫлăхĕсем те тистиплинăна пăхăнмалла, парттире пысăк вырăнта тăратăп тесе усал ĕҫсем тума кирлĕ мар, ĕлĕкхи ҫаплă ĕҫсемпе мухтанса, усă курма кирлĕ мар. Парттин

ђленĕсем пурте пĕр тан, вĕсем пурте партти тистсиплинине тытса тăмалла, тистсиплинăна пăхăнманнисене хăйсен вырăнне кăтартса памалла.

Малалла тата оппоçитси пуçлăхĕсем патшалăх уђрештенисен пуçлăхĕсем пулса тăнине манма кирлĕ мар. Вĕсем парттипе кĕрешеççĕ пулсан, партти хушнисене пурнăçа кӳртсе пыма йепле вĕсем пултарĕç? Çук, вĕсем ăна тăвас çук, çавăнпа та пирĕн пур партти ђленĕ те партти сиесĕн постановленисене пăхăнса, туса пымалла. Малашне, халĕ парттипе пĕрле парттин постановленисене туса пыма, хамăр хуçайствăна хăпартас çĕрте ĕçлеме пултарайманнисем вырăнне çĕнĕ ĕçлекенсем хатĕрлесе пымалла.

Йулашки ыйту: оппоççитси çав тери вирлĕ çапăçаť пулсан, партти уйрăлса каймĕши? Куна хирĕç акă çапла анђах калама пулаť: парттин 14-мĕш сиесĕнђе те оппоçитси партти уйрăлса кайаť тесе хратађђĕ, анђах партти, пĕр шухăшлă пулса, ăна йĕркене кӳртрĕ, партти ыйтăвăсене тата пушшех пĕрлешӳллĕ пулса тума пуçларĕ те, каларĕ: „нимĕнле тавлашу та кирлĕ мар. лăпкă, усăллă ĕçлени кирлĕ“ терĕ. Оппоçитси çапах та хăйĕн парттине арпаштарас политтĕкне пăрахмасť, партти хушнине итлемесĕр, хăйĕн шухăшĕсене йышăнтарасшăн тăрăшаť, парттине уйăрса, арпаштарса йарассипе хăратаť. Анђах партти ăна пĕр шухăшлă пулса хирĕç тăраť, мĕншĕн тесен, партти пĕр шухăшлă пулса Ленин çулĕпе утаť, хăшпĕр партти ђленĕсем хăтăрнинђен хăрамасť. Ĕлĕк Ленин çул кăтартнипе, пирĕн партти темĕнле йăвăрлăхсенђен те тухма пĕлнĕ, халĕ те пирĕн партти, çапăçусене куркаланă, пиçнĕ Тĕп Комиттет çул кăтартса пынипе, пирĕн умри йăвăрлăхсене сирсе йама пĕлĕ. Çапла ĕнтĕ, оппоçитсипе унăн ĕçĕсем çинђен калаçас пулсан, епĕр ĕлĕкхи пекех тĕреклĕ, пĕр пăркаланмасăр Ленин кăтартнă çулпа пырăпăр, темелле. Ку ђăнах та çапла иккенне Т. К.-па Т.К.К. пленăмĕн ĕçĕсем çинђен калаçни, вĕсене пур çĕрте те тĕрĕс тесе йышăнни кăтартаť. Йут пăтшалăхсенђи парттисем те пĕр шухăшлă пулса, Т. К. ĕçĕсене ырлаççĕ. Йăвăрлăхсем çине пăхмасăр, умри сатађсене туса хурăпăр, никама та иккĕленсе, пăркаланса тăма памăпăр. Акă çапла, йулташсем, каламалла пирĕн çĕнĕ оппоçитсине хирĕç, унтан

вара пур орканисатсисене те варлӑ, пӗрлешӳллӗ, вирлӗ ӗҫлеме ђӗнмелле. (*Алӑ ҫупаҫҫӗ*).

Халӗ тата хамӑрӑн Ђӑваш Респуплӗкӗнђи партти орканисатсийӗн ӗҫӗсем ҫинђе, умри сатађсем ҫинђе ђарӑнса тӑма кирлӗ. Опкомӑн пленӑмӗ, хӑйӗн ыйтӑвӗсене сӳтсе йавнӑ ђух хамӑр хуҫайствӑ ӗҫӗсен условисене, партти ӑшӗнђи ӗҫсен условисене асра тытса пыђӗ. Ҫак условисене кура, пленӑм ЧАССР-ђи партти орканисатсийӗн умри ӗҫӗсене паллӑ тусахуђӗ. Умри ӗҫсен тӗп шухӑшӗсене пӗркунах салатнӑ кӑтартуллӑ ҫырура палӑртса хунӑђђӗ. Пленӑм вӑл ҫыруri шухӑшсене йышӑнса ҫирӗплетрӗ, пулас конферентсисене иртерес ӗҫсем ҫине ытларах, тӗплӗрех пӑхма каларӗ. Епӗ паллӑрах ыйтусем ҫинђе анђах ђарӑнса тӑрас тетӗп. Пуринђӗн малтан, йулташсем, умра тӑракан парттири суйлавсемпе конферӗнтсисене иртересси. Конферентсисене иртерме хатӗрленнӗ ђух, вӑл ӗҫе епӗ халӗ кӑтарнӑ условисене асра тытса тӑма кирлине манмалла мар. Ку ӗҫе тӑвас ҫӗрте парттин пӗтӗм масси ӗҫлемелле. Хӑшпӗр партти ђленӗсем, пуринђен ытла партти аппарађӗсенђе ӗҫлеменнисем, парттири суйлавсене иртерес ӗҫе аппаратра ӗҫлекенсем анђах тумалла, тесе шухӑшлаҫҫӗ. Суйлавсене формӑшӑн анђах, аппартсене кӑшт ҫӗнетмешкӗн анђах тӑваҫҫӗ, тесе шутлаҫҫӗ. Ку ыйтӑва ни айалти актива хӑпартса пырас ӗҫпе, ни малтан йышӑннӑ постановленисене мӗнле пурӑнӑҫа кӳртсе пынине тӗрӗслес ӗҫпе ҫыхӑнтармаҫҫӗ. Кун пек пӑхни тӗрӗс мар, пирӗн ӑна улӑштармаллах.

Айалти парторканисатсисен пӳровӗсене суйлани, конферентсисене иртерни—ӗҫе мӗнле тунине тӗрӗслес ҫӗрте, малашнехи ӗҫсене кӑтартса парас ҫӗрте—ђи паллӑ вырӑн йышӑнса тӑмалла.

Малтан йышӑннӑ постановленисене мӗнле туса пынине пӗлмешкӗн ӗҫсене пур йенђен те тӗслӗ пӑхса, тӗрӗслесе тухмалла. Пирӗн партти хӑйӗн ђленӗсем хушшинђе анђах ӗҫлемест, парттире тӑманнисен хушшинђе анђах та ӗҫлемест, — вӑл пӗтӗм советсен ӗҫне, хуҫайствӑ ӗҫне ҫул кӑтартса пырать, ҫавӑнпа та партти ђленӗсен пуринӗн те, активӑн пушшех — пур ӗҫре те активлӑ ӗҫлесе пымалла. Йађђейккӑсен пухӑвӗсенђе, конферентсисенђе хамӑрӑн ҫӗнтерӳсемпе ҫитменлӗхсене

тĕплĕ пĕлсе тăмашкăн, пур советсен, профсойуссен, копператтивсен, сутуилӳ тăвакан уђрештенисемпе орканисатсисен пуçлăхĕсен хăйсен претприйаттисен ĕçĕсене вĕçлесе хумалла. Конферентсисенђе пĕрпĕрин ĕçĕсене тĕрĕслесе, йăвăрлăхсене, çитменлĕхсене, йăнăшсене пĕлсе çитмелле. Текларатсиллĕ ресолђутсисем сахалтарах, паллă, татăклă ĕçсем ытларах пулђђăр. Ĕçĕн кађĕствине аванлатса, пӳрократтисăмпа кĕрешсе, хыçа йулса пынипе, кăшкăрма-хушма йуратнипе кĕрешсе пымалла. Орканисатсисен кађĕствине аванлатса, партти ђленĕсене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме вĕрентсе, тĕрлĕ пайсене çирĕпрех пĕрлештерсе, пĕрле коллективлă ĕçлеме вĕрентсе пымалла. Парттин пĕрешкелĕхне сыхласа, кирлĕ мар тискуççисене хирĕç тăрса, ПСК(п)П ТК-не пур йенђен те пулăшса пымалла. Партти тирпейлĕх решимĕ пирки йышăннă постановленисене пур вăй çитнĕ таран пурăнăçа кӳртсе пымалла. Аппаратсен ђирђĕрсене сыватса, советсен, копперативсен, профсойуссен, тата ытти опђествăлла орканисатсисен ĕçĕсене вăйлăлатса пымалла. Ĕçлекенсемпе хресђенсен çыхăнăвĕне тĕреклетсе ђухăнсем хушшинђи ĕçе вăйлăлатмалла.

Ку лосăнксем çине пӳрне виттĕр пăхмалла мар, вăл лосăнксене пурăнăçа кӳртсе пыни кирлĕ. Епĕр халĕ те хамăр мĕн туни çинђен шухăшласа пăхмастпăр, хамăр ĕçсене тĕрĕслесе пăхма та вĕренеймен. Ĕçри йăвăрлăхсем çинђен те шухăшламастпăр, хамăр çитменлĕхсемпе йăнăшсене йышăнмастпăр. Вăл ĕнтĕ питĕ усал ĕç туни пулать. Кашниннех хăй ĕçĕсене тĕрĕслесе, пăхса пырас пулать, вар çав хамăр çитменлĕхсене пĕтерме май пулĕ.

Йулташсем, пире çав лосăнксемпе, хамăр сатађсем çине çийелтен пăхни пĕтерет, вĕсем мĕн каланине, мĕн тума хушнине çителĕклĕ тăна кĕрсе пурăнăçа кӳртни кирлĕ. Пирĕн конферентсисене кађĕствă тĕлĕшпе лайăхлатас йенђен хытă асăрхаса иртермелле, тетĕпр. Ун çинђен пĕрмайах калаçатпăр, çапах та пурăнăçа кӳртейместпĕр. Епĕр халиђђен те пухусене лайăх хатĕрленсе туса иртермен. Нумай калаçни, пĕлмесĕр ĕçлени пирĕн хушăмăрта пулмалла мар, вĕсене пĕтерме тăрăшмалла. Кашни ĕçе вăхăтра туса çитерни кирлĕ унсăрăн йурамасть. Тирпейлĕх решимне пурăнăçа кӳртмелле

пулсан, ăна хамăр ĕçре те кўртсе пырас пулаť. Пирĕн кунта та Ленин мĕн каласа хăварни çинђен асăнса илмелле. Вăл пур усал ĕçсем тунине ирсĕрлĕхсене питĕ хытă криттĕкленĕ. Ленин, епĕр пĕлсе ĕçлеменнипе ахаљ йумахлани çинђен ак çапла каланă:

— Епĕ, ĕнер „Исвеçти" хаçат çинђе пĕр сăвă вуласа пăхрăм. Сăвви политтĕк шухăшĕпе Майакковски йулташ çырнăскер. Епĕ сăвăсемшĕн ытлах тăмастăп, вăл тĕлĕшпе сахал пĕлнине те пытарас теместĕп. Кун пеккисене епĕ тахçантан варах курман. Хăй сăввинђе вăл комуниссен ĕçне тăрăхласа çыраť; тĕрлĕ саççетанисем пĕрмай тунинђен тĕлĕнсе çыраť. Вĕсем саççетанисем тăваççĕ тет. Сăввине мĕнле çырнине те хак пама пултараймастăп, анђах политтĕк йенђен питĕ тĕрĕс çырни курăнаť. Епĕр ђăнахах вăл çырнă пек, пĕрмайах саççетани çине саççетани тăватпăр, тĕрлĕ комиççисем суйлатпăр, вĕçĕхĕрри те курăнмасť, тем тĕрлĕ плансем тăватпăр. Ĕлĕк вырăс халăхĕ хушшинђе Опломăв йевĕрлĕ çынсем пулнă. Опломăв вырăн çинђе пĕрмайах тĕрлĕ плансем шухăшласа выртнă. Ку вăхăт тахçанах пулнă. Унтанпа Раççейре виçĕ револђутси пулса иртрĕ пулин те, Опломăвла туни халĕ те пĕтмен, мĕншĕн тесен, Опломăвла çынсем çĕр улпуђĕсем хушшинђе анђах мар, хресђенсем хушшинђе те, интеликентсем хушшинђе çеç мар, ĕçлекенпе комуниссен хушшинђе те пулнă. Епĕр хамăр мĕнђул саççетанисем тунипе комиççисенђе ĕçленине пăхсассăнах ĕлĕкхи Опломăв халĕ те пур, тесе калама пулаť. Ăна нумай хутђен çăвас, тасатас, лăтăркас пулаť, вара мĕнле те пулин усă пулĕ. Çаксенђен шухăшласа илсе, хамăр ĕçсем çине тĕрĕс пăхма пĕлес пулаť."

(1922 ç. марттăн 6-мĕш кунĕнђе метталиссен сйесĕнђи комунисла фраксинђе каланă сăмахран).

Йулташсем, пирĕн хушăмăрта çавăн пек ĕçсем пулмаççĕи? Пулаççĕ, комиççи çине комиççи, кĕçĕн комиççи, аслă комиççи, кĕçĕн коллекипе мăнни т. ыт. Ку мĕн вара? Ку вăхăтпа пĕлсе усă курманни, çавăншăн вара хамăра ваљђи вĕренме, партти политтĕкне вĕренме вăхăт та йулмасť. Пирĕн уйесри, оплăçри т. ыт. конферентсисене кађĕства йенђен лайăх иртерме тăрăшмалла.

Халĕ тата парттин шалти темократтийĕ çинђен калаçса пăхăпăр. Ку тĕлте те пирĕн ĕçсем ырах тăмаççĕ. Темократти çине формађнă пăхни çеç курăнаť. Çавăн пек пăхнипе вара хăшпĕр йулташсем тем те тăваççĕ. Конферентси иртерме орканисатсирен вăрттăн хатĕрленеççĕ, комиттета кама кама кӳртмелли çинђен калаçса татăлаççĕ т. ыт.

Ку парттин шалти темократийĕ мар, вăл ыйтăва çителĕклĕ пĕлменни пулаť. Çавăн пек йĕрке куç умĕнђех уйрăмăн уйрăмăн ушкăнланса ĕçленине пĕлтерет. Ăна пĕтерес пулаť, вăл пирĕн хушăмăрта пулмалла мар. Партти ыйтăвĕсене хваттерте пĕр каварлă пулса калаçса татăлни, йе унтан кăна çавăнта суйлăпăр, лешне çав вырăна лартăпăр, тесе калаçнисем пулмалла мар. Конферентсисене ђăнахах темократтиллĕ туса иртермелле. Кун йевĕрлĕ ђирђĕрсем Совет Сойусĕнђи тĕрлĕ орканисатсисенђе пур, тен пирĕн орканисатсисенђе те пулĕ, унпа хытă кĕрешес пулаť, хытă пăхас пулаť. Темократтине йађђейккăсен пӳроне суйланă ђух, йе конферентсинђе çеç пурăнăçа кӳртни сахал. Ăна хамăр ĕçре пĕрмайах туса пымалла. Темократти тĕпĕсемпе усă курса уйăрнă ĕçлекенсен, хăй ĕçĕнђе те ăна пурăнăçа кӳртсе пымалла. Кунсăр пуçне тата партти аппарађĕсенђе пӳрократтисăм йулашкисем пур, ĕçе йертсе пырас çĕрте хӳрере тăнисем те пур. Ĕçре кăтартса пырас вырăнне орканисатси ыйтăвĕсен техниккине çивђĕлетсе пыни курăнаť: çынсене машшин пек пĕр çĕртрен тепĕр çĕре куçараççĕ, вăл ĕçе йĕркелесе пыни пулаťи вара? Пулăшу парса, йăнăшсене тӳрлетес вырăнне, пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçарас йĕркепе йусасшăн. Вăл ĕнтĕ çăмăл май пулаť, анђах вăл лайăх ĕçе йĕркелесе пыни мар, айалта çĕнĕ активиссене хатĕрлени мар. Вăл партти ĕçне мĕнле йĕркелесе пырассине пĕтĕмпех пĕлменни пулаť. Кун пек йапала пур пулсан, ăна пĕтересђĕ.

Ĕçе çак майлă туса пынăран, хăшхăш ђленсене вырăнтан кăлармасăр, вĕсене урăхла айăпласан, теприсем йуратмаççĕ. Вĕсем, кун пек айăплани ытла сахал, теççĕ. Анђах çапла калакан йултащсем парттин тĕп йĕркисене пĕлмеççĕ. Партти айăпа кĕнĕ ђлена айăп вырăнне айăп кăтартасшăн мар. Партти ђленĕ мĕнле айăплă ĕç тунине кура, вăл мĕнле ĕçре

усăллăрах пулма пултарнине кура ăна вырăн памалла. Çакăн пек çитменлĕхсем партти хүшшинђе пулмалла мар. Çавăн пек çитменлĕхсем хăшпĕр орканисатсисенђе пур пулсан, вĕсем ку орканнсатсин ђленĕсем политтĕк тĕлĕшĕнђен пиçсе çитменнине кăтартаť. Çавăнпа та, партти хушшинђи политтĕк ĕçне вăйлăлантармалли кирлех. Пирĕн, пĕрпĕринпе тавлашнинђен хаклă, кирлĕ сатађсем пур. Вăл халăх хуçайствине йусаса тĕреклентерессн. Пур пођшевиксен хăйсен пĕлнине, вăйне акă ăçта хумалла. Çавăнпа та парттин каланă çитменлĕхсемпе пĕр шухăшпа тăрса хытă кĕрешмелле.

Малалла, партти хăйĕн ђленĕсене кăтартса, йертсе пырасси кайра тăни çинђен калăпăр. Епĕр хăш ђухне парттин кăтартса, йертсе пырас ĕçĕ çине çапла пăхатпăр: мĕнле те пулсан уђрештенисенђе пирĕн ђлен ĕçлет пулсан, ку аван. Анђах епĕр ђленсене уђрештенине вырăна лартатпăр та, ун çине урăх çавăрăнса та пăхмастпăр.

Кайран тата мĕнле çул тытса пынине, мĕнле ĕçлесе пынине кăшт пăхнипех иртеретпĕр, вĕсен ĕçне йĕркеллĕ орканисатсилесе пырасси çинђен шухăшламастпăр та. Пирĕн ђленсем уђрештенинђе ĕçленĕ ђух тĕрлĕ саççетанисем, конференсисем т. ыт. туса иртерни аван. Анђах ун çинђен партти комиттеђĕ пĕлмест пулсан, питĕ йапăх вара. Мĕнле ыйтусем лартмалли çинђен калаçса татмаççĕ. Калаçса пăхаççĕ пулсан та, хăшпĕр ђух ахаљ калаçни çеç пулаť, анђах политтĕк йенђен тĕп çулне пирĕн кăтартса памалли çинђен пĕртте манмалла мар.

Хăшпĕр ђух тата кăтаргусем панăшăн ўпкелешеççĕ. Çак çитменлĕхсем пирĕн хушăмăрта пур пулсан, вĕсене пĕтерме тăрăшас пулаť.

Йулташсем, партти комиттеђĕ мĕн кăтартса панине темле пулсан та ĕçе кўртес пулаť. Партти ăçта та пулин ĕçлеме лартнă пулсан, партти кăтартнисене пурăнăçа кўртмеллех. Аппаратри хăшпĕр ĕçлекен йăнăш кăтартусем параť пулсан, тĕрĕс мар ĕçсем тăваť пулсан, — ăна криттĕкле, парттин уставĕ тăрăх, ун пекки ан пултăр тесе партти комиттетне асăрхаттар.

Халĕ тата Совет ĕçне ђĕртесси çинђен. Кунта та çитменлĕхсем нумай. Конферентсисенђе мĕн ĕçленисем çинђен калаçнă ђух кун çине хытă пăхас пулаť. Конферентсинђе мĕн

мӗн тунине уҫҫота илсе малалла мӗн тумаллине кӑтартса хӑвармалла, умри сатаҫсене партти кӑтартнӑ пек пурӑнӑҫа кӳртмелле пултӑр.

Тата тирпейлӗх решимӗ ҫинҫен. Пур ӗҫлекенсемпе хресҫенсене тирпейлӗх решимӗ мӗн тума кирли ҫинҫен хытӑ паллаштарас пулат̆. Кун ҫинҫен хамӑр ҫленсем те кирлӗ таран пӗлмеҫҫӗ. Вулӑсра ӗҫлекенсем хушшинҫен вӑл лосӑнк ҫеҫ, ун пирки ним текрет та ҫук, тесе тухса калакансем пулкалаҫҫӗ. Хӑшпӗрӗсем тата, Мускав ӗҫлекенсен ӗнси ҫинҫе ылттӑн тӑвасшӑн, тесе калаҫҫӗ. Партти мӗн мӗн кӑтартса панине пурӑнӑҫа кӳртес тӗлӗшпе хытӑ ӗҫлес пулат̆. Парттире тӑракансемпе тӑманнисене хытӑ каласа тӑна кӳртсе, вӑл пурӑнӑҫа усӑллине пӗлтерес пулат̆. Ҫапла майпа ӗҫлесе пырса пирӗн промышлӗннӑҫ сотсиалисӑм ҫулӗпе кайнине каласа ӑнлантармалла.

## Орканисатсире мӗнле ҫынсем тӑни ҫинҫен.

Пирӗн орканисатсинҫе камсем тӑни ҫине пӑхсан та ытлах хӗпӗртемелле мар.

Слушӑшҫисен проҫҫӑнӗ ҫитӗнсех пырат̆. Хӑшпӗр ҫух вӗсене хресҫенсемпе те танаштараҫҫӗ. Пуринҫен ытла пирӗн орканисатсисенҫе кӑнтитатсем нумай.

Пирӗн умра хаҫ питӗ пысӑк сатаҫсем тӑраҫҫӗ — вӗсем орканисатсине каҫӗствӑ тӗлӗшӗнҫен лайӑхлатассипе кӑнтитатсене лайӑх вӗрентсе парттине куҫарса пырасси.

Орканисатсин пӗр пек, пӗр ҫулпа утса пымалла. Унӑн итеолокийӗ ҫине, йӗркесӗрлӗхсем ҫине хытӑрах пӑхмалла. Малашне те оппоҫитси мӗнле ыйтусемпе килӗшейменнине, хирӗҫнине хытӑ вӗренмелле. Ҫав ыйтусемпе пурне те кирлӗ таран паллаштарас тесе пикенсех ӗҫлес пулат̆. Ҫак ӗҫсем пирӗн Ҫӑваш Республӗкӗнҫи партти орканисатсийӗ умӗнҫе тӑраҫҫӗ. Анҫах кунпек пысӑк ӗҫсене епӗр массӑсӑр тумастпӑр. Пӗтӗм массӑна — ӗҫлекенсемпе хресҫенсене — хамӑр хыҫҫӑн йертсе пырас пулат̆. Ҫавӑнпа пурин те пӗр пек пулса, тӳрӗ ҫулпа пырса, партти кӑтартса пынине пурӑнӑҫа кӳртсе пымалла. Хамӑр ӗҫпе пӗтӗм массӑна ҫыхӑнтарса пымаллине пӗртте манмалла мар. Ленин та ҫакна тума питӗ ҫӗннӗ: „Хресҫен массипе пӗрле, — пӗтӗм малта пыракан хресҫен

ĕç çыннипе пĕрлешсе хамăр ĕçе, ĕлĕк шутланинђен темиçе хут вăраххăн пĕтĕм массăпа пĕрле туса пымалла. Ун вырăнне, вăхăт çитсен, епĕр калама çук хăвăрт малалла утăпăр. Кăна пĕртте манмалла мар, ку еккономĕккăн çĕнĕ политтĕкĕн тĕп урокĕ пулат".

Ленин сăмахĕсене асра тытсан, парттин пĕрешкеллĕхне тытса тăрсан, массăран уйăрăлмасăр Совет ĕçне йертсе пырсан, Тĕп Комиттет кăтартса пынипе массăна малта йертсе пырсан, — хамăр çул çинђи йăвăрлăхсене пĕтерĕпĕр. Кашни пулас конферентси, кашни тухса калани çак лосăнксемпе иртмелле. Çĕнĕ оппоçитсипе хастарлă, çирĕп кĕрешес тесен партти йышăннă решшенисене пурăнăçа кӳртмелле — вĕсем хамăр çĕршыва интустрилассипе çĕнĕ актив хатĕрлесси. Вара епĕр пулаç йăвăрлăхсене çĕнтерме пултарăпăр, парттин шалти темократтине те кирлĕ таран сарма пултарăпăр. Парттин пĕрешкеллĕхĕ сыв пултăр! Ленин туса хăварнă Тĕп Комиттет сыв пултăр! Оппоçитси пĕттĕр!

(*Алă çупаççĕ*).

## Ыйтусемпе хирӗç таварса каланисем.

**Ыйту:** Çӗнӗ оппоçитси нумайӑн, вӑйлӑн ӗçлети? Ку оппоçитсине Тротски те йерни? Мӗншӗн Ленинӑн ђи çывӑх вӗренекенӗсем комунисла парттин тӗп политтӗк çулӗнђен пӑрӑнса кайаççӗ?

**Хирӗç калани:** Епӗ малтанах, Тротски оппоçитсине йертсе пыраканӗ, тесе каларӑм.

**Ыйту:** Мӗншӗн Тротски йулт. т. ыт. халиђђен арӗслемеççӗ? Епӗ хам халех арӗслеме хушатӑп.

**Хирӗç калани:** Кун пирки епӗ ђылай каларӑмçке.

**Ыйту:** Оппоçитсире ӗçлекенсене мӗншӗн парттирен кӑларса пӑрахмаççӗши? Тӗп Контрођ Комиççипе парттин Тӗп Комиттеђӗ ун пек тепре тусанах парттирен кӑлармалла тесе постановлени йышӑннӑ вӗт.

**Хирӗç калани:** Кун пек тӑвасси вӑл ђи çӑмӑл ӗç, анђах партти оппоçитсине ытла хӗсӗрлесе пырасшӑн мар. Ун пек тӑвас тесен, вӗсене такçанах политтӗк тӗлӗшӗнђен ниме кирлӗ мар тумалла. Партти вӗсемпе кӗрешес ӗçре политтӗк тӗлӗшӗнђен вӗрентни, хамӑр йеннелле çаварни кирлӗ, тет. Ытах оппоçитсирисенђен хӑшӗ те пулин хамӑр тӑшмансем пекех пулса кайсан, вара урӑх ыйту тухса тӑрат, вара вӗсемпе ђӑрмансах тӑмӑпӑр.

**Ыйту:** Ђӑваш орканисатсишӗн çав оппоçитси мӗнле сисӗнђӗ?

**Хирӗç калани:** Пирӗн орканисатси оппоçитсине хирӗç Т. К. майлӑ ресољутси йышӑнни куна питӗ аван кӑтартат.

**Ыйту:** Тырпул хатӗрлес ӗç мӗнле пырат, ун çинђен пленӑм мӗн каласа хӑварђӗ?

**Хирӗç калани:** Епӗ, йулташсем, хамӑр респуплӗк çинђен пит те сахал каларӑм. Епӗр сӗлӗ çеç хатӗрлетпӗр. Хамӑр респуплӗкре 600.000 пӑт пуçтарса сутма пултаратпӑр, тата 250.000 пӑт хамӑр промышлӗннӑç ваљђи хатӗрлемелле килет. Пленӑмӑн ресољутсисем çинђен йађђейккӑсен пулас пухусенђе сӳтсе йавӑпӑр.

Хакĕ 32 пус.